ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

7 (4369) №, 2014, нарăс, 20 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ТĔЛĔНТЕРМĔШ

## Тетте шкула пырсан...



Лиза хальлĕхе пур сас паллине те палламасть-ха. Апла пулин те «Тетте» журнала çав тери кăмăллать. Юратнă кăларăмĕ килсен пĕрремĕш класра вĕренекен Маша аппăшне канăç памасть.

– Ак çакна вуласа пар-ха. Унта мĕн çырнине йăлтах пĕлес килет, – çыпçăнать ун çумне куршанак евĕр.

Маша та «Теттене» юрататъ, çавăнпа ăна алла илсе хаваспах йăмăкĕ çумне вырнаçать. Сăрласа илемлетмелли страницăшăн вара тепĕр чух хирĕçӳ сиксе тухать. Ара, пĕри те, тепри те малтан алла кăранташ тытасшăн-çке.

Пĕр кунхине шкул алăкĕ уçăлчĕ те пӳлĕме сап-сарă тум тăхăннă пукане кĕрсе тăчĕ. Лиза ăна курсан малтанах шикленсе ӳкрĕ.

– Ан хăрăр, ачасем, ку «Тетте» журнал пуканийĕ. Вăл та Тетте ятлă. Сире ятарласа курма килчĕ, – терĕ воспитательница хаваслanса.

Чăн та, Тетте ырă кăмăллăскер иккен. Кашни ачана юратса ачашланисĕр пуçне хăваламалла вылярĕ. Хĕпĕртенĕ ачасем ăна çав тери килĕштерчĕç. Акă тухса каяс умĕн хайхискер сисмен çĕртенех Лизăна йăтса хăй çумне чăмăртарĕ. Ах, çавăн чухне пăлханнăран хĕр ачан чĕри ури тĕпĕнчен тухса таратчĕ пуль! Çапах та ун çумĕнче ырă-ырă пулса кайрĕ пĕчĕкскере. Ара, вăл «Тетте» журнала кăмăллать те, пуканине те юратса пăрахрĕ. «Ай, пуçĕ те мĕн пы-ы-ысăкăш, пӳрнисем те сарлака-а-а», – тесе тĕлĕнсе пăхрĕ ун çине.

Шел, нумай тăмарĕ Тетте вĕсем патĕнче. Мăнаçлăн аллисемпе сулкалашса:

– Чипер юлăр, ачасем! Тепре тĕл пуличчен! Тунсăхласанах тепре килĕп сирĕн пата! – тесе хăварчĕ.

Вăл кайсан пĕр вăхăт хĕр ачасемпе арçын ачасем пĕр-пĕрин çине чĕнмесĕр пăхса тăчĕç. Унтан ăмăртмалла чӳрече еннелле ыткăнчĕç.

– Шурă юр тăрăх епле утнине курса юласчĕ, – тĕрткелешрĕç пĕр-пĕрне хыçалта тăракансем кантăк умнерех тухас тесе.

...Тĕлĕкри пек хăвăрт пулса иртрĕ ку ĕç-пуç. Лиза килне çитсенех аслисене пулни-иртнине сывлăш çавăрса илейми каласа пама тытăнчĕ.

– Вăл пирĕнпе хавасланcах вылярĕ. Тепре пирĕн пата хăнана килсен эпир ăна килне часах ямăпăр. Ытларах пулас килет унпа. Анне, анне, кала-ха, Тетте хăй тем пысăкăш та амăшĕ вара унăн мĕн çӳллĕш-ши? – ыйту пачĕ вăл сасартăках амăшĕ çине кăн! пăхса.

– Пĕлместĕп, эпĕ амăшне мар, Теттине хăйне те курман-çке, – терĕ Лиза çине ăшшăн пăхса.

– Апла ку ыйтăва Теттине хăйне парăп-ха тепре килсен. Унччен епле те пулин чăткалăп, – терĕ хĕр ача çаплах пуканене куçĕ умĕнчен ямасăр.

*Элиза ВАЛАНС.*

Сĕнтĕрвăрри районĕ,
Карапаш пуçламăш шкулĕ.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Нарăсăн 1-мĕшĕнчен – малтанхи хакпа

***Хисеплĕ вулакансем! "Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн нарăсăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ***

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | 54800 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 218-22 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 272-22 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 243-18 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 130-98 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 122-70 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 226-62 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | 43887 | 102-90 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 220-08 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |

### Паянхи кăларăмра:

**4 стр.**

Çыру илсен салтаксем те савăнаççĕ

**5 стр.**

Чăх тукмакне пиччĕшĕпе пайланă Яна Георгиева

**9 стр.**

Çĕленсем те пĕр-пĕриншĕн тавăраççĕ

ЧУНРИ

# Ĕмĕт — медицина оборудованийĕ хатĕрлесси

«Кашни çыннăн пурнăçăн анлă сукмакĕпе çирĕппĕн утмалла, тĕллев лартнă пулсан – ăна пурнăçлама тăрăшмалла», – шухăшне пĕлтерет Марина Сорокина. Тен, çавăнпах Шăмăршă районĕнчи Палтиел шкулĕнче вĕренекенскер "5" тата «4» паллăсемпе ĕлкĕрсе пыма, спортра çитĕнӳсем тума ăнтăлать.



Пушă вăхăта та кирлĕ пек усă курма тăрăшать 11-мĕш класра ăс пухакан хĕр ача. Вăл 8-мĕш класранпа тĕрлĕ ташăпа интересленет. Шкулта пултаруллă та маттур ачасем пуррине кура хăй «Ритм» ушкăн йĕркеленĕ. Унта 4-7 класра вĕренекенсем ташлама çӳреççĕ. Унсăр пуçне Марина тĕрлĕ ташă конкурсне, концерта хутшăнать. Сăмахран, шкулта иртнĕ балра вăл ташăри мăшăрĕпе малти вырăна тухма пултарнă.

– Ачасем хаваспах манăн ташă кружокне çӳре пуçларĕç. Вĕсен куçĕсем савăнăçпа тулнине курса хамăн чунăм та хĕпĕртет, тăрăшса ĕçлес килет. Эппин, ушкăна ахаль йĕркелемен. Усси пур, – пĕлтерет Марина.

Вĕренӳ вара чи малта пулнине те палăртмалла. Кирлĕ ăс-тăн çителĕклĕ илсен пурнăçра та çăмăлрах пулĕ-çке. Çакна асра тытса хĕр ача тăрăшса вĕренет, киле парса янă ĕçсене тивĕçлипех пурнăçлать.

– Кирлĕ çын пулас килет. Хам ума темĕн чухлĕ тĕллев лартнă эпĕ, вĕсене пурнăçа кĕртесшĕн тăрăшатăп. Веçех çынран килет: хăвна кăтартма пĕлсен, пултарулăх анлă пулсан ĕмĕтсем те пурнăçланаççĕ, – шухăшне пĕлтерет Шăмăршă пики.

Марина мĕн пур мероприятие хастар хутшăнать, вăл шкулти ачасен " Туслăх" пĕрлешĕвĕн ертӳçин çумĕ те. Кашни çулах вĕсем районти ачасемпе çамрăксен пĕрлешĕвĕсен пухăвне хутшăнаççĕ. Палтиел шкулĕнче пултарулăха аталантармалли чылай кружок пурришĕн те савăнать вун пĕрмĕш класра вĕренекенскер. Сăмахран, кунта волонтерсен ушкăнĕ ĕçлет. Вĕсем Чăваш Енре пирус туртакансемпе ăнлантару ирттермелли акцие хастар хутшăнаççĕ, Палтиелте те, кӳршĕ ял шкулĕсенче те интереслĕ вăйăсем ирттереççĕ.

Волонтер спортпа туслă пулнине те палăртмалла. Вăл районти, республикăри чылай ăмăртура çĕнтернĕ. Марина ачаранпах çемьесем хушшинче ирттерекен тĕрлĕ ăмăртăва хутшăнма кăмăллать. Çапах та чун киленĕçне вăл баскетболта курать. Марина – Палтиел шкулĕн баскетбол командин капитанĕ. Унсăр пуçне ăна районти баскетболистсен пĕрлештернĕ командине кĕртнĕ. Вăл ытти хĕр ачасемпе пĕрле район чысне республикăра иртнĕ ăмăртусенче сахал мар хӳтĕленĕ. Шкул ачисем хушшинче ЧР Пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн пынă ăмăртăва хутшăнма та пултарнă Шăмăршă хĕрĕсем. Кăçал та район команди баскетбол турнирĕнче вылянă. Патăрьел, Каçал, Шăмăршă, Елчĕк, Тăвай районĕсен командисене çĕнтерсе хĕр ачасем финала тухнă. Вĕсене ЧР баскетбол Федерацийĕн президенчĕ Сергей Худаев тупăсем тата ятарлă форма парнеленĕ. Нумаях пулмасть вара Марина физкультура предмечĕпе республика олимпиадинче район чысне хӳтĕленĕ. Виççĕмĕш вырăна тухма пĕр очко çеç çитмен унăн.

– Пирĕн районта "Чăваш вăрманĕ" наци паркĕ пур. Эпĕ "Бригантина" ĕç бригадин членĕ те. Ыттисемпе пĕрле кашни çулах "Парксен маршĕ" акцие хутшăнатпăр, йывăççене пăхатпăр, – калаçăва тăсать Марина Сорокина.

Часах шкулпа сыв пуллашма та вăхăт çитĕ. Малтан вара пĕрлĕхлĕ патшалăх экзаменĕсене тытмалла. Пулас професси çинчен те чылай шухăшланă пике. Вăл тĕрлĕ медицина оборудованийĕ хатĕрлекен инженер пуласшăн.

– Çак çĕнĕ хатĕрсем çынна усă кӳрĕç. Манăн тепĕр ĕмĕт – пирĕн çĕр-шывра йывăр чирлекен ачасем валли медицина учрежденийĕсене ытларах тăвасси. Аслă вĕренӳ заведенийĕнче ăс пухнă вăхăтра пушă чухне эпĕ ачасене пулăшасшăн. Тĕрлĕ енлĕ аталансан, мероприятие хастар хутшăнсан ĕмĕтсене пурнăçлама та çăмăлрах пулĕ, – сăмахне вĕçлерĕ хастар.

***Ирина КОШКИНА.***

**Сăн ӳкерчĕкре:** Марина Сорокина ташă ушкăнне çӳрекенсемпе.



# Кĕнекепе туслашатăн ăслăлăх пухатăн

*Кĕнеке пĕлӳ çăл куçĕ пулнине Шурут шкулĕн вĕренекенĕсем аван ăнланаççĕ. Çавăнпа та тăхтавра е уроксем хыççăн ачасем тӳрех библиотекăна васкаççĕ.*

– Ираида Николаевна, мана тăван литература урокĕ валли ваттисен сăмахĕсемпе çыхăннă кĕнеке кирлĕччĕ, – ыйтать пĕри.

– Эпĕ вара химипе лаборатори ĕçĕ туса ирттерме хушма литература тупасшăн, – сăмах хушать иккĕмĕшĕ.

– Мана «Чăваш юмахĕсем» кĕнеке тупса парăр-ха, тархасшăн, – чĕвĕлтетет виççĕмĕшĕ...

Кашни кун шкул библиотекинчен татăлмаççĕ çамрăк вулакансем. Ираида Николаевна Анисимова библиотекарь вара пурин кăмăлне те çийĕнчех тивĕçтерме тăрăшать. Сĕнӳсем парать, канашсемпе савăнтарать.

Хальхинче те, акă, пиллĕкмĕш класра вĕренекен Владислав Маков çӳлĕк çинче «Килти вулав кĕнеки» тупрĕ те ăна аларан вĕçертмерĕ. «Интереслĕ калавсем пур пулас. Ăна пĕр-икĕ кунра вуласа тухатăпах», – ĕмĕтленчĕ арçын ача. Саккăрмĕшĕнчи Игорь Васильев та хăйне кăмăла каякан литература часах тупрĕ. Унпа тĕплĕн паллашма, шухăшласа вулама шантарчĕ.



Пиллĕкмĕш класра вĕренекенсен пĕр ушкăнĕ уроксем хыççăн та киле кайма васкамарĕ çав кун – вĕсем библиотекăна çул тытрĕç. Библиотекарь пулăшнипе тăван тавралăха сыхласси çинчен усă калаçу ирттерчĕç. Хăйсен тăрăхĕнчи йывăç-курăк, чĕр чун тĕнчи пирки каланине кашни тимлĕн итлерĕ. «Пире кунта яланах килĕшет, – теççĕ ачасем. – Çĕннине, хальччен пĕлменнине алла илетпĕр эпир вулавăшра».

Кунта тирпейлĕ те илемлĕ, хăтлă. Ачасем кĕнекесене «сиплеме» те пулăшаççĕ библиотекаре. Çурăлнă листасене çыпăçтарма, киввисене юсама ятарлă мастерской та ĕçлет. «Кĕнеке – этемлĕхĕн чи пысăк пуянлăхĕ» тесе ватăсем тĕрĕс каланине ку шкулта кашни асра тытать.

***Владимир ФЕДОРОВ.***

Комсомольски районĕ,
Шурут шкулĕ.

**Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕсенче:** Ираида Николаевна Анисимова библиотекарь усă калаçу ирттерет; «Пуян иккен пирĕн вулавăш», – савăнаççĕ вĕренекенсем.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● АДРЕС
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13,
VII хут.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
А.ЛЕОНТЬЕВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
И.КОШКИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
2308 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 610
Пичете нарăс уйăхĕн 19-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Пĕр-пĕрне ăнланса, йышпа канашласа

Тулли те интереслĕ пурнăçпа пурăнать тăваттăмĕш «б» класс. «Пире тунсăх, пирĕншĕн никам та тăрăшмасть» – тесе пусăрăнса лармаççĕ вĕсем. Çук унашкал тӳнтер ен. Ну, тем калăр та, çук!









Нимĕн те тăвайман. Те лара-тăра пĕлмен йыш пулнăран, те темĕнле те интересленекен ачасем пухăннăран çавнашкал. Калама йывăр. Кашнинчен вут-хĕм сапать тейĕн. Вĕренӳре кăшт кам та пулин «уксахлама» тытăнать-и – тӳрех лайăх паллăсемпе ĕлкĕрекенсен пысăк йышĕ пулăшăва васкать: туссем юлташа ăнлантараççĕ, малалла туртăнма пулăшаççĕ. Пĕр-пĕр концерта хатĕрленес е ăмăртăва пуçтарăнас пулсан та пурте кар тăрса çине тăраççĕ те юрра-ташша хатĕрленеççĕ...

Çакăн пек туслă йыша пĕтĕçтерет те ĕнтĕ вĕсен ертӳçи Тамара Георгиевна Чашкова. «Çыхман çапă шăпăр мар» тенешкел, эпир пĕрремĕш кунсенчех туслăх мĕнне ăнланса пурăнма пуçăнтăмăр, – тет Тамара Георгиевна. – Çакăнтан пуçланчĕ те пулĕ пирĕн малашлăхри çитĕнӳ. Халь ак кашни хăй тĕнче. Çав уйрăм тĕнчерен пĕр лайăх планета пулса тăчĕ. Вăл – тăваттăмĕш «б» класс».

Тамара Георгиевнăн хăйĕн класс ачисемпе чăннипех те мухтанма сăлтавĕ пур. Вĕренӳре малта пыракансем те, тĕрлĕ мероприяти пуçаруçисем те, ырă канашпа е сĕнӳпе савăнтаракансем те юнашарах. Наталья Иванова вĕренӳ отличници, Наталья Иванова чечек ĕрчетекен ăста тата нумайăшĕ класшăн чăннипех те тăрăшаççĕ. Пурте хăй юратнă кружока е секцие хаваспах çӳрет. Милош Николаев, сăмахран, район центрĕнчи «Хĕлхем» физкультурăпа спорт комплексĕнчи шахматистсен кружокĕнче хăйĕн ăсталăхне туптать. Арçын ачан çитĕнĕвĕпе Зиновий Парамонович Федоров кружок ертӳçи те кăмăллă, ача спортра малашлăхра çитĕнӳ тума пултарасса курса савăнать.

Анна Суранова, Олег Егоров тата Анна Семенова чăн-чăн сценаристсем те, мультипликаторсем те. Вĕсем хаваспах тĕрлĕ мультфильм валли сюжетсем ӳкереççĕ. Пĕчĕкскерсем аллисенчи киçтĕксемпе самантрах мультфильмри сăнарсене тĕрлĕ сăрăпа хут çине сăнлаççĕ те чĕрĕлĕх кĕртеççĕ. Тусĕсенчен Эдуард Лебедев та, Ваня Захаров та, Лена Петухова та, Роман Никандров та, Вениамин Викторов та, Серафима Захарова та юлмаççĕ. Вĕсем те чăн-чăн ăстасем. Ӳкерес ĕçре маттур та пултаруллă.

Тамара Георгиевнăн туслă йышпа савăнмасăр майĕ çук. Малашне те çак суйласа илнĕ ăнăçу çулĕпе талпăнасшăн тăваттăмĕш «б» класс. Пĕр-пĕрне ăнланса, пĕрле канашласа утаççĕ маттурсем пĕлӳ тĕнчипе.

***Владимир ЛЕОНИДОВ.***

Элĕк районĕ,
Элĕк вăтам шкулĕ.

**Илья КЛОЧКОВ сăн ӳкерчĕкĕсенче:** Милош Николаев çамрăк шахматист; Çамрăк мультипликаторсем; «Кĕçех çĕнĕ мультфильм хатĕр пулĕ», – теççĕ ăстасем; Зиновий Парамонович Федоров кружок ертӳçи тăваттăмĕш «б» класс ачисемпе тренировка ирттерет.

•ПĔР РАЙОНТАН ХЫПАРЛАÇÇĔ

**Пуянкассинчи** пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта талантсене тупса палăртас тĕлĕшпе «Пултаруллисене шыратпăр» конкурс иртрĕ. Кашни класс ачи тĕрлĕрен сценка, миниатюра, сăвă, юрă-ташă парнелерĕ. Пĕрремĕшсем «Урокра», иккĕмĕшсем «Шкул портфелĕ», виççĕмĕшсем «Ах, çăткăн!», «Пĕр-пĕрне пулăшса», тăваттăмĕшсем «Шкул канашĕ», улттăмĕшсем «Кружока çырăнасси», çиччĕмĕшсем «Колхоза ĕçе илни», саккăрмĕшсем «Ача сачĕн ертӳçи» хатĕрленĕ сценкăсем питĕ интереслĕ те кулăшла пулса тухнă. Çиччĕмĕш класра ăс пухакан Валерий Пушкин вуланă сăвă тата Рая Ярхунова шăрантарнă юрă пурин кăмăлне те кайнă. Сценкăсенче калăпланă сăнарсенчен виççĕмĕш класри Кирилл Макаровăн рольне чи лайăххи тесе йышăннă.

**Анат Чаткасри** пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта спортпа физкультурăна пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Кунта час-часах тĕрлĕрен вăйă йĕркелеççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ çак шкулăн вĕренекенĕсем ăмăртусенче лайăх кăтартусемпе савăнтараççĕ.

Кунта сĕтел çи теннисла выляса шкулта мала тухассишĕн, шкул чемпионĕ ята çĕнсе илессишĕн турнир иртнĕ. Выляканссем те, кураканссем те йышлăн пухăннă. Улттăмĕш класра вĕренекен Яна Угасинана никам та парăнтарайман, вăл çĕнтерӳçĕ пулса тăнă. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш – Рамиля Бахитова (7 класс), Лариса Ухтиярова (9 класс). Арçын ачасенчен 9-мĕш класри Петр Ильинран ăнăçлăрах выляканни тупăнман. Вăл – чемпион! Николай Нянин (9 класс) – иккĕмĕш, Александр Хрисанов (7 класс) виççĕмĕш вырăнсенче.

**Кивĕ Чукалти** пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулти пуçламăш классенче вĕренекенсем валли чăваш чĕлхипе литература эрни иртнĕ. Эрнелĕхре ачасене «И.Я. Яковлев – чăваш халăхне çутта кăларакан» презентаципе паллаштарнă, шкул музейне экскурсие илсе кайнă, ребуссем шутлатарнă. Ачасем «Чĕлхе турнирĕ» конкурсра тупăшнă. Вĕренекенсем çĕннине нумай пĕлнĕ.

Эрнелĕхре малти вырăна «Чĕвĕлти чĕкеç» команда йышăннă. Мероприятисене йĕркелесе ирттерекенĕ пуçламăш классен вĕрентекенĕ Н.Н. Мишкина пулнă.

**Пăчăрлă Пашьелри** пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта выпускниксемпе тĕл пулу йĕркелесси тахçанах йăлана кĕнĕ. Çак йăларан кăçал та пăрăнса иртмен. Мĕншĕн тесен ăна вĕрентекенсем те, вĕренекенсем те чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Шкулпа сыв пуллашнисем хăйсен пурнăçĕпе паллаштараççĕ, çитĕнĕвĕсем çинчен каласа параççĕ, шкул ачисене кирлĕ професси суйласа илме пулăшаççĕ. Çакнашкал тĕл пулусем нумайлăха ачасен асĕнче юлаççĕ. Шкулпа сыв пуллашнисем вĕрентекенсене кашнинчех ăс панăшăн, ырра вĕрентнĕшĕн чун-чĕререн тав тăваççĕ.

***Александр МИХАЙЛОВ.***

Шăмăршă районĕ.

## Çĕр-шыв хÿтĕлевçисем

# Салтаксем çыру çыраççĕ

*Салтака каясси – кашни яш тивĕçĕ. Вăл хÿтĕлевçĕ пулма çуралнă мар-и? Çакна арçын ачан пĕчĕкренех ăнланса ÿсмелле. Салтак атти тăхăнма чунĕпе те, кĕлеткипе те хатĕр пултăр вăл. Арçын ачасем! Çĕр-шыв хÿтĕлевçин кунĕ çывхарса пынă май уяв ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр! Сирĕнте – пысăк шанăç. Эсир хальлĕхе салтак мар-ха, анчах хÿтĕлевçĕ теме юрать. Аннĕре, аппăрсемпе йăмăкăрсене яланах пулăшма хатĕр пуль? Ахăртнех, вĕсене инкекрен сыхласчĕ тесе хăш чухне канăç та тупаймастăр-и тен? Эппин, чунăрпа эсир салтак пекех. Пиччĕрсенчен ырă тĕслĕх илме ан ÿркенĕр. Сире чăн-чăн салтак пурнăçĕпе кăштах та пулин паллаштарас тесе вĕсем пирĕн пата çыру çырса ячĕç.*

**Стас ПАВЛОВ** (Шупашкар):






Акă епле пуçланчĕ вăл. Призыв пунктне чĕнсе илсен иккĕмĕш кунне пире çар тумĕ, типĕ апат тата кутамкка пачĕç, эпир сывлăш çар вăйĕсен ретне лекнине пĕлтерчĕç. Кольск çур утравĕнче вырнаçнă Мурманск тăрăхĕн Мончегорск хулине каятпăр иккен. Каçхине пире тăвансемпе юлташсем поезда лартса ячĕç. Вĕсене çулталăк курас çуккине ăнланнăран питĕ тунсăхчĕ.

Поездра пĕр-пĕринпе паллашрăмăр, хамăр пирки каласа патăмăр, унччен мĕнле пурăннине аса илтĕмĕр. Пĕрле аслă лейтенантпа прапорщик пурччĕ. Эпир вĕсенчен çарти йĕрке тата пурăнмалли условисем çинчен ыйтрăмăр. «Сывлăш нÿрĕклĕхĕ те, пусăмĕ те пысăк. Çур çул каç тăрать, çурçĕр шевлине те курăр-ха ак. Тепĕр çурри вара – кун», – терĕç пире. Иккĕмĕш кунхине Онега кÿлли патĕнчен иртрĕмĕр. Вăл питĕ пысăк, çĕр хĕрринех кайнăн туйăнчĕ. Виçĕ кунтан Оленегорск хулине çитрĕмĕр. Çĕрле, икĕ сехетре автобуса куçса лартăмăр та вăл пире виçĕ сехет тĕлне чаçе çитерчĕ. Унта вара пĕтĕмпех ют. Çав вăхăтрах кăсăклăх та çуралчĕ. Вĕренÿсем пуçланчĕç.

Малтанах хăнăхма йывăртарахчĕ. Кунти шыв çемçе, çавăнпа тăтăшах ĕçес килетчĕ. Ирсерен ултă сехет çурăра тăмалла, хĕрĕх пилĕк çеккунтра тăхăнса строя тăма ĕлкĕрмелле. Тÿрех пулмастчĕ. Кашни ирех тумтир çухине çĕлеме тата хамăра йĕркене кĕртме хăнăхрăмăр. Мĕншĕн тесен пире çирĕп тĕрĕслеççĕ. Зарядкăна тухаттăмăр, столовăйне тата казармăна чупса таврăнаттăмăр. Кăнтăрлахи, каçхи апата каяттăмăр. Кун йĕркипе пурăнма пуçларăмăр тесен те юрать. Присягăччен эрне юлсан тата унччен пĕр уйăх маларах та маршпа утма, вырăнта тăма тата стройран тухма вĕрентме тытăнчĕç. Пурин те лайăхах пулмастчĕ, анчах эпир тăрăшаттăмăр. Уйăх вĕçĕнче присяга тытрăмăр. Унта офицерсем те нумайччĕ. Присяга хыççăн пире тĕрлĕ çĕре уйăрса ячĕç. Эпĕ автомобиле техника тĕлĕшĕнчен тивĕçтерекен батальона лекрĕм. Унта пачах урăхла, вĕренÿ пайĕнчи пек мар. Ирхи тĕрĕслевпе зарядка пур пĕрех пулать. Эпир автомат салатма тата пуçтарма, машинăсене пăхса тăма, наряда çÿреме вĕрентĕмĕр. Вун виçĕ сехетрен пуçласа вун пиллĕкчен – çывăрмалли вăхăт. Ун хыççăн вара хăшĕ наряда хатĕрленет, хăшĕ хăйĕн ĕçĕпе аппаланать. Кашни шăмат кун мунча кĕретпĕр, клубра вăрçă çинчен калакан фильмсем куратпăр, кунтах сĕтел çи теннисла тата бильярдла выляма пулать. Телефонсене канмалли кунсенче çеç параççĕ, мĕншĕн тесен ытти чухне вĕсемпе усă курма юрамасть. Çак вăхăтра эпир атте-аннепе тата юлташсемпе шăнкăравласа калаçатпăр. Каçхине телефонсене тавăрса паратпăр.

Çапларах иртет пирĕн çар пурнăçĕ. Нумай тус-юлташ тупрăмăр ĕнтĕ, пĕрпĕрне çывăхрах пĕлме тытăнтăмăр. Çур çул хушши килшĕн тата тăвансемшĕн тунсăхларăм. Халĕ манăн виçĕ уйăх çурă çеç юлчĕ, çавăнпа тунсăх вăйланчĕ, хăвăртрах киле çитес килет. Унта мана юратаççĕ тата чунтан кĕтеççĕ-çке...»

**Алексей КОЗЛОВ** (Елчĕк районĕ, Кушкă):






Утă уйăхĕн пĕрремĕшĕнче ăсату каçĕ иртрĕ. Тепĕр кунне Канаша çитрĕмĕр. Призыв пунктĕнче икĕ çĕр каçсан пире хĕрĕх чăваша Елань поселокне илсе кайрĕç. Шăпах çакăнта манăн салтак пурнăçĕ пуçланчĕ теме юрать. Ирхи улттăра дневальнăй: «Рота, подъем!» – тесе кăшкăрса ячĕ те пурте харăс сиксе тăтăмăр. Йĕри-тавра кĕшĕлтетеççĕ: кам çăвăнма чупать, кам тумланать...

Утă уйăхĕн пиллĕкмĕшĕнче çыхăну батальонне куçарчĕç, унта виççĕмĕш ротăна, тăваттăмĕш взвода çирĕм виçĕ чăваш пĕрле лекрĕмĕр. Малтанах салтак пурнăçĕ йывăр теме те пулать, анчах та кайран хăнăхса çитетĕн. Мĕншĕн йывăр-и? Мĕншĕн тесен çĕнĕ çĕрте, çĕнĕ çынсем, çĕнĕ коллектив – пĕтĕмпех ют.

Ирсерен зарядка тума хăнăхрăмăр. Тĕрлĕ хускану тăвасси, икĕ çухрăм чупасси йăлана кĕчĕ. Вĕренÿсĕр пуçне автоматран пеме те çÿретпĕр, уйăхне икĕ хутчен граната ывăтатпăр.

Чÿк уйăхĕнче экзамен тытнă хыççăн мана Чебаркуле куçарассине пĕлтерчĕç. Ку хыпар савăнтарчĕ те, хурлантарчĕ те. Юлташсенчен уйрăлас килмерĕ. Чебаркуле ротăран ултă çын пуçтарăнса кайрăмăр. Чаçе çитсенех тухтăрсем тĕрĕслев витĕр кăларчĕç те казармăна вырнаçтарчĕç.

Салтакра телефонпа усă курма май параççĕ. Каçхи 8-10 сехетсенче – çыру çырмалли вăхăт. Салтакра çыру çырас йăла пĕчĕккĕн пĕтсе пырать теме те пулать. Халĕ телефонпа çыхăну тытасси анлă сарăлнă-çке. Тус-юлташпа Интернетра та калаçаятăн. Атте-анне патне час-часах шăнкăравлатпăр, çывăх çынсене пăшăрхантарас килмест.

Арçын ачасем! Сире пурне те салтака юрăхлă пулма сунатăп. Салтакра пулнă çынна ĕлĕк те сума сунă, халĕ те хисеплеççĕ. Çара лексен нумай япалана ытларах хаклама тытăнатăн. Атте-аннене, кукамая, шăллăмсемпе йăмăксене, аппасене, тус-юлташсене тата пурне те-пурне те пысăк салам!»

**Дима ИВАНОВ** (Вăрнар районĕ, Кивъял):






Чăн-чăн арçын пулас текенĕн салтак пурнăçне пĕлмеллех. Çар вăл – тĕп пурнăç шкулĕ. Кунта вăйлă, хастар та çивĕч, тирпейлĕ, хăюллă пулма, ĕçе тĕрĕс тата вăхăтра пурнăçлама, çĕр-шыва юратма вĕренетĕн. Салтак кашни çырăва чăтăмсăр кĕтет, вуланă чухне чĕре виçесĕр савăнăçпа тулать. Тăвансене, юлташсене питĕ курас килет.

Кунта нумай çĕнĕ çынпа паллашрăм. Уявсенче клубра илемлĕ юрăсем юрлатăп. Мероприятисене тăтăшах хутшăнатăп. Мана хисеплеççĕ. Салтак пурнăçĕ çинчен нумай калама пулать, пĕтĕмпех çырас пулсан çырура вырнаçмĕ те. Мĕн пур чăваш ачине, хамăр ял çыннисене, уйрăмах аннене Зоя Елисеевнăна тата аттене Юрий Геннадьевича, пиччепе шăллăма, тăвансене, юлташсене, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕн уйрăмне, пĕрле вĕреннĕ тантăшсене тата «Çĕнĕ ятсем» ушкăна пысăк салам!»

**Борис БОРИСОВ** (Хĕрлĕ Чутай районĕ, Кив Атикасси):






Çар пурнăçĕ чаçре пуçланчĕ темелле пуль. Çитсенех пире казармăна илсе кайрĕç. Эпир – çичĕ чăваш. Урăх никам та çукчĕ. Темиçе кунтан ыттисене илсе килчĕç. Кайран присягăна хатĕрленме пуçларăмăр. Ун хыççăн виççĕмĕре автомобиль взводне куçарчĕç, унта пире питĕ лайăх кĕтсе илчĕç. Тепĕр кунне мана тÿрех КАМАЗ шанса пачĕç. Çак техникăна пăхăнтарма хăвăрт вĕренсе çитрĕм те дежурнăй машинăпа çÿреме пуçларăм. Уйăхран ачасене уя илсе кайрĕç, эпир иккĕн тăрса юлтăмăр, çапла икĕ уйăха яхăн пурăнтăмăр. Çулла паркри машинăра та çывăрнăччĕ. Темĕн те курăн салтакра. Кунта интереслĕ, çартан пăрăнса юлманшăн пĕрре те ÿкĕнместĕп.

Çĕнĕ çул умĕн тревога пулса илчĕ. Ку та питĕ кăсăклă. Офицерсемпе прапорщиксем – питĕ лайăх çынсем, пĕр-пĕрне алă тытсах сывлăх сунатпăр.

Халĕ кунта çамрăккисене илсе килчĕç, вĕсене машинăпа çÿреме вĕрентетĕп. Унччен эпĕ аслă водительччĕ, халĕ отделени командирĕ. Хăш чухне кулăшла самантсем те сиксе тухаççĕ, пурне те пĕр харăс каласа параяс çук.

Çак самантпа усă курса аттепе аннене, аппана, асаннене тата юлташсене пурне те пысăк салам калас килет. Аннене çитсе пыракан çуралнă кунĕпе, аттене Çĕр-шыва хÿтĕлекенсен кунĕпе саламлатăп. Эпĕ аякра пулин те, чунпа – сирĕнпех. Халĕ нумаях юлмарĕ ĕнтĕ, часах киле çитĕп. Чăваш Енĕм, мана кĕтме хатĕрлен!»

**Владимир ЧАНГАЙКИН** (Хĕрлĕ Чутай районĕ, Çĕн Атикасси):






Эпĕ сирĕн пата инçетри Балаших хулинчен çыратăп. Кунта Дзержинский дивизийĕнче салтак тивĕçне пурнăçлатăп. Малтанах çар йĕркине хăнăхма йывăртарахчĕ. Çапах хамшăн çĕннине уçма питĕ кăсăклă пулчĕ. Чи çивĕч тапхăр тесе çамрăк салтак курсне каламалла пуль. Ун чухне çар пурнăçĕпе паллашаттăмăр кăна-çке. Эпĕ – çар водителĕ. Мускав хулипе тăрăхĕнче тĕрлĕ ĕçе тухатпăр, хирти условисенче вĕренÿ irttеретпĕр. Çывăх çынсенчен çыру илме çав тери кăмăллă. Эсĕ вĕсемшĕн хаклă пулнине, вĕсем сана юратнине тата кĕтнине ăнланса илетĕн те хăвăртрах киле таврăнас килет. Паянхи кун телефон çыхăнăвĕ анлă сарăлнăран çыру çÿретес йăла пĕчĕккĕн çухалса пырать. Çавăнпа алăпа çырнă çырăва тытса вуласан чунра тата савăкрах.

Кашни каччăн салтакра пулмалла. Халĕ службăра ĕлĕкхи пек çирĕм пилĕк çул мар, çулталăк çеç тăмалла-çке. Шăпах çарта чухне пурнăç илемне тата çывăх çынсене хаклама вĕренетпĕр. Салтакран таврăнсан малашне мана çăмăлрах пуласса шанатăп, кунти пурнăç шкулĕ витĕр тухни ахаль иртмĕ».

*Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

# Анне чĕрçи çинчен анмăттăм...

Йĕпреç районĕнчи Пучинке шкулĕн виççĕмĕш класс пӳлĕмне ăнсăртран лекрĕм. Унта пĕр-пĕччен шухăша путнă арçын ачана курсан çывăхарах пытăм.

– Хитре тăханнă эсĕ паян, кĕпӳ те шап-шурă. Аннӳ çуса панă пулĕ-ха ăна, – терĕм куçран пăхса.

Пĕр хушă чĕнмесĕр тăнă хыççăн лăпкăн çеç:

– Çук, маншăн атте тăрăшать. Каçхине те унпа юнашар çывăратăп, – пулчĕ кĕске хурав.

– Аннӳне юратмастăн-им? – юнашар вырнаçнă май кăсăклантăм çав-çавах.

Тунсăхлă куççем ман çине чăр! пăхрĕç.

– Анне пулнă пулсан-и? Манран телейлĕ ача пулмĕччĕ. Чĕрçийĕ çинчен анман пулăттăм. Эпĕ улттăра чухне вăл çĕре кĕнĕ. Шел, пачах та ас тумастăп ăна. Халĕ манăн ăна хы-ы-ытă ыталаса юратас килет. Хамăр класри ачасем пек манăн та аннепе алран-алла тытăнса çӳрес килет. Унпах лавккана каяс килет, вăл туянса панă кашни япалашăн савăнăттăм. Кирилл Васильев амăшĕсĕр пітĕ тунсăхлать. Кашни кун, – терĕ сасартăках мăн çын евĕр.

Пӳлĕм шăпланчĕ. Вăл та, эпĕ те пĕр-пĕрин çине пăхса тăратпăр. Унтан арçын ача умне çакнă параппана аллипе сăтăркаларĕ, хăех калаçăва малалла пуçарчĕ.

– Аттене пур çĕрте те пулăшма тăрăшатăп. Ĕне сунă чух пĕрле пулăшатăп. Пĕлетĕр-и, эпĕ ытларах икерчĕ çиме кăмăллатăп. Çавăнпа ăна хамах пĕçеретĕп. Чустине çăрнă чух юрварне ытларах ярсан тутлăрах та пулать вăл. Халĕ хĕл кунĕнче чăхсем çăмарта сахалтарах тăваççĕ çав. Çулла çитсенех йăвасенчен пĕчĕк витрепе пуçтарма тытăнатăп та-ха. Унччен чăтмалла ĕнтĕ епле те пулин. Пушă вăхăт тупăнсанах хамăртан инçех мар пурăнакан пиччесем патне васкатăп. Унта мана вĕсен виççĕри Кристина хĕр ачи кĕтет-çке. Эпĕ алăк урлă каçнă-каçман аллисене саркаласа хирĕç чупать. Унтан мĕн пур теттине урай варрине кăларса хурать. Хăш чухне темчченех вылятпăр вара, – терĕ те Кирилл тарăн шухăша путрĕ.



эпир. Апат янтăланă вăхăтра та айккинче выляса çӳреместĕп, çĕр улми шуратма

Кантăкран урамалла пĕр хушă пăхса тăнă хыççăн каллех сăмах çăмхине сӳтме пуçларĕ.

– Шкултан хăвăртрах вĕренсе тухасчĕ. Юратнă профессие алла илес килет. Аслă пичче пекех вăй хурса укçа ĕçлесе илнĕ пулăттăм. Атте те савăннă пулĕччĕ вара. Анне пурăннă пулсан... Вăл та паллах мана хавхалантарĕччĕ, – ассăн сывласа та васкамасăр пуплерĕ виççĕмĕш класра вĕренекен Кирилл Васильев.

# Эпĕ ялан пĕрремĕш!



Яна Георгиева виççĕмĕш класра кăна вĕренет пулин те, унăн паянхи кун вунă медаль, çирĕм пилĕк грамота тата икĕ Кубок пур.

– Çакăншăн мана мар, Гена пиччене тав тумалла. Ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен секцине çӳрекенскер эпĕ ултă тултарсанах мана хăйпе илсе кайрĕ. «Йăмăкăм, санăн йывăрлăха пăхмасăр малалла талпăнмалла. Çитĕнӳ тăвас тесен, паллах, нумай тар тăкмалла. Ăмăртусенче яланах малтисен ретĕнче пуласса шансах тăратăп», – терĕ ун чухне. Пичче сăмахĕсене пĕр хăлхаран кĕртсе тепринчен кăларса ямарăм çав, çулсерен ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен ăмăртăвĕнче çĕнтерӳ картлашки çине пĕрре мар хăпартăм, – хăпартланса та мăнаçланса калаçрĕ Канаш районĕнчи Карăклă шкулĕн хастар вĕренекенĕ Яна Георгиева.

Пур çĕрте те пĕрремĕш вăл, вуннăмĕш класра ăс пухакан пиччĕшĕ пекех. Акă пĕлтĕр хастарлăхне кура Шупашкарти ăмăртура стена çине çакмалли сехет парнеленĕ ăна, Çĕнĕ Шупашкарти тупăшура пледлă пулнă. Вырăскас Пикшихрен вара грамотăпа, Кубокпа тата медальпе таврăннă.

– Шел, Пушкăртра кăшт кăмăл пăсăлчĕ. Иккĕмĕш вырăна çеç тухрăм. Çĕнтерӳçĕ Пушкăрт хĕр ачи пулчĕ çав. Ман шутпа, жюри членĕсем тĕрĕс мар хакларĕç. Паллах вĕсем хăйсен тăрăхри спортсменсене мала кăларассишĕн тăрăшрĕç. Юрĕ ĕнтĕ, пурнăçра ялан пĕрремĕш пулаймастăн. Çапах кăмăла çĕклемелĕх парнепе савăнтарчĕç. Йывăç каткапа Пушкăрт пылне пачĕç тата 5 пин тенкĕ укçа! Аван вĕт-ха! Пылĕпе кашни кун техĕмлĕ чей ĕçрĕмĕр. Тарпа ĕçлесе илнĕ нухратпа хампа йăмăк валли хитре футболка туянтăм. Лида çав тери хĕпĕртерĕ. Ăна тăхăнсан тĕкĕр умне чупса пычĕ те: «Ах, тетте!» – терĕ хăй çинчен куçне илме пĕлмесĕр. Çавăн пекех шкула каймалли япаласем: линейка, тетрадь, ручка-кăранташ, ластик туянтăмăр, – терĕ хĕр ача савăнăçлăн.

Хĕр ача калаçăвне тимлĕ итлесе ларакан Саша Никоноров хушша-хуппа кĕмесĕр чăтаймарĕ.

– Яна, линейка, тетрадь-ручка тейиччен, тен, кĕскен çеç шкул хатĕрĕсем туянтăм темеллечче санăн? Ун пек килĕшӳллĕрех илтĕнет вĕт-ха, – терĕ арçын ача тенкелне шутарса çывăхарах вырнаçнă май.

– Саша, ан кансĕрле. Ăшри савăнăçа каласа пĕтерме ирĕк парсам. Пĕлетĕр-и, пĕр çулхине Канашра иртнĕ Акатуй ăмăртăвĕнче те çĕнтерӳçĕ пултăм. Чăх парнелерĕç вĕт! Шел паллах, çăмартине çисе кураймарăм. Мăн кун çитсен ăна пусрĕç, – терĕ шухăша путса.

Сăмахшăн кивçене кайма юратман Саша каллех ыйту памасăр чăтаймарĕ.

– Вара? Икĕ тукмакне те хăвах çирĕн-и? – тĕлĕнсе пăхрĕ хайхискер хĕр ача çине.

– Эпĕ хытă пăрça мар. Мана спортпа пичче туслаштарнă вĕт-ха, ăна пула çитĕнӳ тăватăп. Тукмаксене пиччепе пайларăмăр. Пĕлетĕн-и, Сашук, мĕн тери тутлă пулчĕ какай! Унăн тути халĕ те чĕлхе çинчех-ха, – хăпартланчĕ çаплипех хĕр ача. – Иккĕмĕш класра вĕренекен Антон шăллăм та спортăн ку енĕпех ӳсĕмсем тăвать. Паянхи кун унăн виçĕ мадаль, пилĕк грамота пур. Начар мар кăтарту. Унсăр пуçне эпир унпа хаваспах музыка шкулне çӳретпĕр. Баянпа питĕ лайăх калать, эпĕ ăна ку енĕпе çитейместĕп çав. Кăштахран йăмăкăм Лида та спорта чун-чĕререн юратасса шансах тăратăп. Эпĕ хам вара ӳссен урăх никам та мар, тренер пулăп! Ку манăн татăклă сăмах.

# Юрă-кĕви тĕнчине кăмăллаканскер



Вĕрентекен пулма ĕмĕтленекен Катя Лепешкина пĕчĕк чухнех пуканийĕсене пĕр канăç паман. Вĕсемпе хĕр ача кашни кун "урок" ирттернĕ. Пĕлĕвĕсене кура кашнине журнала ятарлă паллă лартса хакланă.

– Халĕ ман теттесем çӳлĕк çинче канса çеç лараççĕ. Ĕнтĕ вĕсемпе выляма манăн пĕр вăхăт та çук. Паянхи иленӳ пач урăхла. Ӳкерме юрататăп, уйрăмах шурă хут çине чĕр чунсене, çут çанталăка тăрăшса куçаратăп. Кайран хам ӗçсене пăхса ытараймастăп. Пӳртре чухне ăшă çĕрте мăрлатса тĕлĕрекен кушаксене ӳкерме тăрăшатăп. Пуçне çĕклеми йăраланса выртаканскерсене сăнлама лайăх вара. Ӳкерчĕкĕсем те ăнăçлă пулса тухаççĕ, – тет Улатăр районĕнчи Суйкăн шкулĕн улттăмĕш класĕнче «5» паллăпа кăна вĕренекен Катя Лепешкина хăпартланса.

Хĕр ачан сасси çав тери уçă пулнăран юрлама юратать.

– Тĕлĕнсе каймалла, килтисенчен юрăкĕвĕ тĕнчишĕн касса каякан çук. Эпĕ вара... юрăсăр пурăнаймастăп. Уяв-концерта та хаваспах хутшăнатăп, пултарулăхăмпа куракана хаваспах савăнтарăп, – паллаштарать вăл çаплах хăй иленĕвĕпе.

**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕсем.**

*Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

СТИПЕНДИАТ

# Патриотла сăвăсем шăрçалама кăмăллать



***"Пултараллă çын пур çĕрте те маттур", – теççĕ халăхра. Ку сăмахсем Тăвай районĕнчи Çĕнĕ Пуянкасси ялĕнче пурăнакан Наташа Владимировăна та пырса тивеççĕ. 10-мĕш класра вĕренекен пике вĕренӳре те лайăх паллăсемпе çеç ĕлкĕрсе пырать, шкулти мĕн пур мероприятие хастар хутшăнать, республикăра, районта иртекен пултарулăх конкурсĕсенче малти вырăнсене йышăнать. Кăçал вăл ЧР Пуçлăхĕн стипендине илме тивĕçнĕ.***

— Эпĕ алă усса ларма юратмастăп, хама пур енлĕн аталантарма тăрăшатăп. Кашни ĕçе тивĕçлипех пурнăçлатăп, чуна парса ĕçлетĕп тесен те йăнăш пулмĕ. Тĕрлĕ конкурса хутшăнса çĕнсе илнĕ Хисеп хучĕсемпе дипломсене вара пухса пыратăп. Вĕсем аслă вĕренӳ заведенине вĕренме кĕмешкĕн те кирлĕ пулĕç. Хальхинче вара стипенди илме пулăшрĕç. Стипендие илсе тăма чи пултаруллисене суйлаççĕ-çке. Ăна валли эпĕ иккĕмĕш хут документ пухрăм, – тет Çĕнĕ Пуянкасси хĕрĕ.

Наташа уйрăмах сăвă конкурсĕсене кăмăлланине пĕлтерчĕ. Хăй çырнисемпе вăл районта, республикăра темиçе те паллаштарнă. Вăл ытларах патриотла сăвăсем шăрçалать: вăрçă, Тăван çĕр-шыв темисене хускатать. Район конкурсĕнче пĕрремĕш вырăна тухма та пултарнă.

– Сăвăсем пурте чăвашла. Пĕр-пĕр конкурса хутшăнма кăмăл пулсан вĕсене тата та илемлĕрех шăрçалама тăрăшатăп, çавăн чухне вара мана атте те пулăшать, чăваш чĕлхипе литература учителĕ Эльвира Николаевна Кириллова та редакцилет, – пĕлтерет сăвă ăсти.

Пике районти музыка шкулне çӳреме те вăхăт тупать. Улттăмĕш класранпах çул такăрлататать вăл унта. Çулĕ çывăх мар пулин те пăшăрханмалли çук – автобус кĕске хушăрах илсе çитерет. Наташа музыка шкулĕнче тĕрлĕ инструмент калас ăсталăха тăвать çул хушши ӳстернĕ: халĕ вăл çăмăллăнах пианино калать, гитарăпа та туслă. Унсăр пуçне тĕрлеме кăмăлланине те пĕлтерчĕ пике, анчах пушă вăхăт тупма çăмăл мар. Кăçал музыка шкулĕнче иртекен экзаменсене хатĕрленмелле. Шкулта та лайăх паллăсемпе ĕлкĕрсе пымалла, музыка шкулне те васкамалла, сăвă шăрçаласа конкурса хутшăнмалла! Вăхăчĕ ăçтан тупăнать-ши хĕр ачан?

– Эпĕ ӳкерме те кăмăллатăп, – йăл кулать Наташа. – Ытларах хам валли. Ӳкерчĕксене вара пухса пыратăп, вĕсене конкурса тăратас тесе шухăшламанччĕ-ха. Тен, пĕррехинче хутшăнма та май пулĕ.

Унсăр пуçне хĕр ача кашни çул ăслăлăх конференцийĕсене хутшăнать. Хăйĕн ĕçĕсенче чăваш чĕлхипе, чăваш культурипе тата экономикăпа çыхăннă çивĕч ыйтусене уçма пама тăрăшать. Пĕлтĕр вăл "Ĕлĕкхи чăваш ячĕсем" ĕç пурнăçланă. Кăçал вара юлташĕпе ялти Киремет йывăççи çинчен тĕпчев хатĕрлесе ăслăлăх конференцине хутшăнасшăн.

– Тăрăшсан усси пулать. Веçех çынран килет. Лайăх вĕренсен, пур енлĕ аталансан хăвна çăмăлрах, – ыттисене канаш парать Çĕнĕ Пуянкасси хĕрĕ Наташа Владимирова.

*Ирина КОШКИНА.*

● КУЛĂШ КАРТИШĔ



– Анне, мĕншĕн ку канфет «Пан улми» ятлă? – ыйтать ывăлĕ амăшĕнчен.

– Мĕншĕн тесен унта кăштах пан улми хушнă.

– «Мăр-Мăр» канфета вара мĕн хушнă?

* * *

Кĕве-амăшĕ тата унăн пĕчĕк ывăлĕ шкапра лараççĕ, кĕрĕк çиеççĕ.

– Анне! Манăн вĕçме юрать-и?

– Çук! Кĕрĕк çи!

– Питĕ шел! Ĕнер вĕçсе пăхрăм та мана çынсем тăвăллăн алă çупса саламларĕç.

* * *

– Ну, йытту мĕнлерех пурăнать-ха?

– Аванах. Вăл мана лайăх ăнланать: эпĕ шкултан килсенех портфелĕме кĕрсе каять, дневнике туртса кăларать те кравать айне пытарать!

* * *

Пĕр çыннăн килĕнче таракан йышланса кайнă. Ку инкек çинчен кӳршине каласа парсан лешĕ çапла сĕнет:

– Кашни кĕтесе пырса: «Çимелли çук! Çимелли çук!» – тесе кăшкăр.

Хайхискер каланă пек тăвать. Çĕрле ăна таракансенчен пĕри вăратать:

– Хуçа, тăр, эпир çимелли илсе килтĕмĕр!

* * *

Улттăри арçын ача ыйтать:

– Мĕншĕн арăслансем чĕрĕ какай кăна çиеççĕ?

– Мĕншĕн тесен пĕçерме пĕлмеççĕ, – хуравлать саккăрти аппăшĕ.

* * *

– Атте, мĕншĕн ăмăрт кайăк пĕр вырăнта чылайччен вĕçсе тăрать.

– Бензин пĕтнĕ пуль!

* * *



Асламăшĕн çуралнă кунне мăнукĕ кĕл чечек çыххипе килет.

– Тавах, мăнукăм! – савăнса каять асламăшĕ. – Мĕн тери хитре чечексем! Пирĕн пахчара та çавăн пеккисемех çитĕнеççĕ-çке.

– Текех çитĕнмеççĕ ĕнтĕ...

* * *

Амăшĕ – ывăлне:

– Эсĕ мĕн, аçу парнеленĕ пур теттене те çĕмĕртĕн-и?

– Çук-ха! Мăлатук юлчĕ.

* * *

Пĕчĕк Петя бумеранг ăсталанă. Ашшĕ ăна чӳречерен ывăтса йăлăхрĕ ĕнтĕ...

* * *

– Асатте, эсĕ пĕчĕк пулнă-и?

– Çапла, мăнукăм, эпĕ те пĕчĕк пулнă.

– Ну кулатчĕç пуль ачасем санăн сухалпа кукша пуçунтан!

* * *

– Анне, манăн уçăлмашкăн тухма юрать-и?

– Хура халхапа-и?

– Çук, юлташсемпе.

* * *

Аслашшĕ çемçе пукан çинче сăмсипе хыттăн шăхăрса çывăрать. Мăнукĕ унăн тумтирĕ çинчи тӳммине çавăркалать.

– Мĕн тăватăн? – ыйтать асламăшĕ.

– Ку радио ĕçлемест пулмалла. Урăх хум тытасшăн-ха!

# Сăвă вĕренме йывăр-и?

**Пирĕн сĕнӳсене шута илсен питех те çăмăл!**

1. Чи малтанах сăвва сасăпа икĕ-виçĕ хутчен вулăр. Унта мĕн çинчен каланине куç умне кăларса тăратма тăрăшăр та сирĕн пуçра мĕн те пулин юлатех. Халĕ сăвва тепĕр хут васкамасăр вулăр, сăмахсене ас туса юлма тăрăшăр. Текста хут çине куçарса çырăр. Ку мел ас тăвăма çирĕплетет. Çырса илнĕ вăхăтра сасăпа вулама та ан ӳркенĕр.

Сăвва мĕнле хут çине çырса илетĕр, çавăнтан кăна вĕренĕр. Малтан пĕрремĕш йĕркине вулăр та пăхмасăр калăр, кайран – ик йĕркине пĕрле, унтан – ыттисене. Кашнинчех пĕрер йĕрке хушса пырăр.

Çапла майпа пĕр страница вĕренме сире сехет те çитĕ. Вăхăт сахаллине туйăр пулсан сăвă вĕренме çывăрас умĕн çирĕм минут уйăрăр. Кун пек вăл сирĕн асăра лайăххăрах кĕрсе юлĕ.

2. Ку ĕмĕрте кашни шкул ачинех ашшĕ-амăшĕ кĕсье телефонĕ илсе панă пуль. Хăшĕ-пĕрин унта сасă çыртарма диктофон та пур. Шăпах çав чее япала сире сăвă вĕренме пулăшĕ те. Васкамасăр та уçăмлă вуласа диктофон çине çыртарăр. Халĕ мĕн хатĕрленине итлесе пăхăр та çав вăхăтрах текста куçпа йĕрлесе сасăпа вулăр: малтан тăватшар йĕрке, кайран пĕтĕмпех. Вĕренсе çитнĕ пек туйăнчĕ пулсан кĕнекене хупса хурăр та сăвва тепĕр хут диктофонри сасăпа пĕрле пăхмасăр вулăр. Асăннă меслет пулăшнипе ют чĕлхери сăмахсене те вĕренме ансат.

*Туссем! Пирĕн сĕнӳсем сире пулăшасса шанатпăр. Сăвва пăхмасăр вуласа «5» илмелле пултăр! Енчен те сирĕн хăвăрăн меслет пур пулсан, çырса пĕлтерĕр, ыттисем те шута илччĕр.*



ÇИВĔЧ ЫЙТУ

# Ача-пăча кĕнекин мĕнлерех пулмалла, е Мĕн пирки вуласшăн çамрăксем?

*«Кĕнекесем çынна ырăрах тăваççĕ, ку вара искусствăн тĕп тивĕçĕ кăна мар, пĕртен-пĕр тĕллевĕ-тĕр», – тенĕ Иван Гончаров çыравçă. Ача-пăча кĕнекисемшĕн асăннă ен нимрен те хаклăрах. Анчах пур кăларăм та çакнашкал пахалăхпа мухтанма пултарать-и-ха?*

## «...шухăшлакансем çырмаççĕ, çыракансем шухăшламаççĕ»

Вулав ачасен пурнăçĕнче еплерех вырăн йышăнни питĕ пĕлтерĕшлĕ. Шăпăрлан паян мĕнпе кăсăкланнинчен вăл ыран кам пуласси тÿремĕнех килет. Пĕчĕк чухне паллашнă-илтнĕ юмах-халап, сăвă-калав ача асĕнче чылайлăха кăна та мар, ĕмĕрлĕхе юлать. Шăпах çак тапхăрта идеалсен шыравĕ пе палăртăвĕ пырать. Ывăл-хĕр тавра курăмĕ аталанать, кăмăл-сипетĕн вăл е ку йĕркисем çирĕпленеççĕ. Ахальтен мар Василий Сухомлинский педагог та çапла палăртнă: «Вулав – чÿрече, ун витĕр ачасем тĕнчене тата хăйсене тĕпчеççĕ». Литературăн паха тĕслĕхĕсене ăша хывса ÿсни ачари çынлăха амаланма май парать.

Шел те, ачасемшĕн чăннипех те кăсăклă тата усăллă хайлав питĕ сахал, уйрăмах аслăрах ÿсĕмри яш-кĕрĕмпе хĕр упраç валли. Мĕнпе çыхăннă-ши ку? Вырăссен паллă поэчĕ, критикĕ, историкĕ тата куçаруçи Петр Вяземский асăрханă тăрăх: «Чылай литературăн инкекĕ акă мĕнре – шухăшлакансем çырмаççĕ, çыракансем шухăшламаççĕ». Ачасем валли çырасси вара пушшех те кăткăс ĕç. Вĕсене улталаймăн, пуш параппан çапса хăв хыççăн ертсе каяймăн. Хăйне айвана хунине, йăлт «чăмласа» панине тÿсме пултараймасть кĕнекен çамрăк тусĕ. Фантази тĕнчине кĕрсессĕн те чăнлăхпа çыхăну татăлмалла мар. Юмахпа кулленхи пурнăç палăрмаллах улшăнса тăрсассăн каллех ăнланмалăх çуралать. «Епле-ха капла, кĕнекере пĕр тĕрлĕ, пурнăçра – пачах расна. Эппин, автор суять», – пĕтĕмлетет шăпăрлан. Çак тата ытти хирĕçĕве пĕтерес тесен литература анинче çанă таварса ĕçлес текенĕн ăста çыравçă кăна мар, психологпа вĕрентекен те пулмалла. Ача чунне туймалла. Унсăрăн кĕнеке вулавăшсен çÿлĕкĕсемпе лавккасен сентрисем çинче çеç тусанланса выртĕ.

«Кичем кĕнекене хупма... япăх фильмран тăрса утма... тата хăвна хакламан çынсемпе сыв пуллашма пĕлмелле», – тенĕ Александр Грин çыравçă. Çамрăк вулакансем ку шухăша, тен, илтмен те. Анчах ун чăнлăхĕ вĕсемшĕн ахалех паллă. Кичем кĕнекене нимĕнле те ÿкĕте кĕртсе вулаттараймăн шăпăрлана. Малтанхи страницăранах тыткăна илмерĕ тĕк малалла уçмасть те вăл.

## Ырă сăнар – паха тĕслĕх

Çулсеренех Чăваш кĕнеке издательстви çамрăк вулакансем валли çирĕме яхăн кĕнеке пичетлесе кăларать. Вĕсенчен чылайăшĕ икĕ чĕлхепе тухни кăларăмсемпе чăваш кăна мар, вырăс ачисене те паллашма май парать. Эппин, чĕлхене вĕренме хистет. Халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетесси те юлашки вырăнта мар. «Икĕ чĕлхе – икĕ ăс», – тесе ахальтен шахвăртмасть чăваш. Пĕлÿ нихăçан та ытлашши пулмасть.

Тĕп издательство кăларакан кăларăмсемпе «Тантăш» хаçат та паллаштарсах тăрать. Сăмахран, пĕлтĕр кăна вулакансем патне çак кĕнекесем çитрĕç: Николай Карай «Мучи пĕви», Лидия Сарине «Телейлĕ кăмпа», Олег Печников «Шухши пичче калавĕсем», Геннадий Кириллов «Йытăпа Сунарçă», Людмила Симонова «Маленькие беглецы. Пĕчĕк таркăнсем», Андрей Растворцев «Домовенок Фока и его друзья. Упраçă Хуккапа унăн тусĕсем», Александр Савельев-Сас «Эпир – ял ачисем», Марина Карягина «Аптраман кăвакал», Эдуард Фомин «Чи хитре чĕлхе» т.ыт.те. Пĕчĕккисене пысăк тимлĕх уйăраççĕ поэтсемпе прозаиксем. Хайлавсем çинче чарăнса тăмăпăр. Вĕсене пурне те пĕр уйрăмлăх пĕрлештерсе тăрать – геройĕсем ырă та маттур, тавçăрулă та сатур. Йывăрлăхра пуç усмаççĕ, тĕрĕслев витĕр тивĕçлĕ тухаççĕ, тĕрĕс пĕтĕмлетÿ тăваççĕ.

Йăнăшасси, тÿрĕ çул çинчен пăрăнасси кирек камăн та пулать паллах. Нимĕн те туман çын çеç йăнăшмасть. Чи кирли – кăлтăксене вăхăтра асăрхаса тÿрлетме пĕлни, айăпа йышăнма пултарни, каçару ыйтма хăюлăх тупни. Çапла вара кашни сăнар ăш пиллĕ те мал ĕмĕтлĕ пулма, ыттисене пулăшма, телейшĕн кĕрешме вĕрентет. Усалли кăна хăех сыпăçать-çке-ха, тивлете çĕнсе илмелле, кайран тата упрама пĕлмелле. Унсăрăн Асамат кайăкĕ каллех вĕçсе тарать...

Кăçал та Чăваш кĕнеке издательстви шкул çулне çитмен ачасемпе кĕçĕн, вăтам тата аслă шкул ÿсĕмĕнчи вĕренекенсем валли çирĕм ытла кĕнеке кăларма палăртнă. Хăшне-пĕрне çеç асăнăпăр: Лев Кадкин «Çерçи кăнтăрĕ», Альбина Юрату «Туслă çемье», Светлана Гордеева «Кăмпа карçинкки», Геннадий Юмарт «Улăп еврĕлĕ пуласчĕ», Арсений Тарасов «Чăваш кĕпи», Геннадий Кириллов «Пушмак тасатакан висĕ ача», Николай Теветкел «Çĕрлехи çутăсем», Елена Чекушкина «Пăрлă шыври хĕвел пайăрки» т.ыт.те. Ытти хальлĕхе вăрттăнлăхра юлтăр.

## Вĕренекенсемпе çыравçăсене мĕн хумхантарать?

«Ачасем валли çитĕннисем валли çырнă пекех çырмалла, анчах тата лайăхрах», – тенĕ пĕр ăсчах. Çапах çамрăк ăрăва, уйрăмах паянхине, мĕнпе илĕртмелле-ха поэтсемпе прозаиксен? Арçын ачасемпе хĕр пĕрчисем кĕнекене алран ямасăр вулаччăр тесен мĕне асра тытмалла? Çамрăксене хумхантаракан проблемăсене еплерех татса параççĕ, çутатаççĕ авторсем хăйсен хайлавĕсенче? Çак ыйтусене литература анинче тăрăшакансене хăйсене патăмăр.

**Арсений ТАРАСОВ, çыравçă, «Тăван Атăл» журналăн шеф-редакторĕ:** «Ачасене хумхантаракан темăсемпе ĕçлемелле çыравçăсен. Литературăра ку енĕпе ятарлă политика кирлĕ. Аслăрах ÿсĕмри ачасен чун хускатăвĕсене çутатакан, вĕсене пăлхантаракан, çийĕнчех татса памалли ыйтусемпе çыхăннă хайлавсем çук пирĕн. Хаçат-журналăн та çавна шута илсе ĕçлемелле, мĕншĕн тесен ачасене хумхантаракан ыйту çав тери йышлă. Тен, çитĕннисенчен те кун чухлĕ çук-тăр. Кусăм тапхăрĕ-çке-ха. Чылай япала пирки ашшĕ-амăшĕпе калаçаймасть вăл, тантăшĕсем те пулăшаймаççĕ. Çавăнпах «чуххăмăн» çитĕнсе çитетпĕр эпир. Савни, чун-чĕрене ăнланакан çын тупасси – питĕ кăткăс пулăм. Вăл та хăй тĕллĕн, «чуххăмăн» пулса пырать вара.



Ача-пăча тата çамрăксен литературин аталанăвĕ тахçанах канăçсăрлантарнă мана. «Пионер сасси» хаçатра «хх у» повесть пичетленсе тухнăччĕ. Тĕпре – ачасемпе аслисем хушшинчи конфликт. Вăл яланах çивĕч пулнă. Кĕçĕнрех ÿсĕмри ывăл-хĕр валли илемлĕ хайлавсем те, юррисем те пур-ха. Çитĕнерехпе чăваш литературинче, музыкинче, теле куравĕпе радиовĕнче чун ыйтăвĕсене татса пама пулăшакан çимĕçсем тупăймарăмăр пуля яш-кĕрĕмпе хĕр упраç ирĕкçĕрех ют чĕлхеллĕ культура енне сулăнать. Чăвашлăх хăвачĕ чакса пыни çакăнпа та çыхăннă.

«Чăваш кĕпи» калавсен пуххине ачасем валли ятарласа çырнă эпĕ. Унта кăмăл-сипет ыйтăвĕсене хускатнă. Тĕп тĕллев – çитĕнекен ăрăва шухăша ярасси – мĕн вăл ырăпа усал, вăл е ку хăтланкаларăш мĕн патне илсе çитерме пултарать, мĕне хĕрхенмелле т.ыт.те».

**Николай ИШЕНТЕЙ, çыравçă, «Капкăн» журналăн шеф-редакторĕ:** «Паянхи кун тĕлне ачасем валли чылай кĕнеке пичетленет. Тулĕк ку вĕсен пахалăхĕ ÿснине пĕлтермес. Ача-пăча кăларăмĕн пысăк пахалăхпа тухмалла. Сĕтел çинче компьютер ларать тата кĕнеке выртать тейĕпĕр. Шăпăрлан компьютера çутиччен малтан кĕнекене алла илтĕр тесессĕн унăн илĕртÿллĕ, ÿкерчĕксемпе пуян пулмалла.



Хайлавпа паллашнă май ача хăйне валли ырă сăнар туптăр, ырăпа усала уйăрса илме вĕрентĕр. Теплицăри чечек пек çитĕнмелле мар паллах унăн. Анчах «Ужастиксем», ман шутпа, çамрăк кăмăлне çирĕплене çитиччен пăсаççĕ, ним ырри патне те илсе пымаççĕ. «Хăрушсăрлăх вĕрентĕвĕ» калавăри сăнарсем çак шухăша çирĕплетеççĕ те.

Ача тÿрремĕн каланине юратмасть, ăна вăйă урлă ăса вĕрентмелле. Пĕтĕмлетĕвне хăй тутăр. Поэзи каçĕсемпе литература тĕл пулăвĕсенче кашнинчех пĕр ыйту паратăп вĕренекенсене. «Сирĕн мĕн пирки вулас килет?» – тенине хирĕç пĕр саслăн: «Хамăр çинчен!» – теççĕ вĕсем. Хальхи пурнăç, паянхи ĕмĕр çамрăкĕ – акă мĕн интереслентерет яшсемпе хĕрсене. Çапла вара, пурнăçпа тан, тен, малахах та пымалла çыравçăн. Эппин, ыран мĕн пулассине те тĕшмĕртмелле».

**Елен НАРПИ, çыравçă, И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ доценчĕ:** «Илемлĕ литературăра висĕ тĕп компонент – кăсăклă сюжет, хитре чĕлхе тата хăйне еврĕлĕх – хайлава пĕлтерĕшне кÿреççĕ. Вĕсемсĕр çамрăксене кăна мар, çитĕнисене те илĕртеймĕн. Кĕçĕн çулхи ачасем пирки сăмах пырать тĕк кунта ÿкерчĕксем пысăк вырăн йышăнаççĕ.



Кунсăр пуçне хальхи пурнăç геройĕсем кирлĕ. Тен, вулаттарса кĕртсе яма геройсен пуплевĕнче çамрăксен сленгĕпе те усă курма юрать. Литературăн нормăланă, таса чĕлхипе çырни ачана вулавран пистерме те пултарать. «Эпир капла калаçмастпăр!» – тесе хирĕçлĕ вăл. Тĕрĕссипе вара унăн çав сăнарсенче хăйне палласа илмелле. Историллĕ, вăхăт паллилĕ произведенисен кивелнĕ тенине пĕлтермест ку, анчах çамрăксен хăйсем пирки вулас килет.

Манăн «Пăрлă шыври хĕвел пайăрки» повеçре те ĕмĕрхи ыйтусенех хускатнă – çамрăклăх, шкул пĕтерекен, студент пурнăçне тин активекен яш-кĕрĕмпе хĕр упраçăн таса туйăмĕ. Трагеди витĕр тĕрĕс-тĕкел тухса чун тасалăхне упраса хăвараççĕ геройсем. Хайлава иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче çырнă пирки унта хальхи самана варкăшĕ – кĕсье телефонĕсемпе компьютерсем т.ыт. япала – çук. Анчах тĕпре вăл мар, пурнăç çулĕ çине тухакан яшсемпе хĕрсен юратăвĕ. Туйăмсем вара, ман шутпа, нихăçан та кивелмеççĕ. Тепĕр енчен пăхсассăн, çирĕм çул каялла мĕн пулнине пĕлме те интереслĕ».

***Ольга АВСТРИЙСКАЯ.***

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# Паха тĕслĕх сĕнер-и, Хĕвел пулса çÿрер-и?

Ачасем, пĕр ыйту парам-ха сире. Пурнăçра хăш карап кирлĕрех те пĕлтерĕшлĕрех – тинĕсре ишекенни, космоса вĕçекенни е хир анлăшне висçекенни, тырра пĕрчĕшерĕн пухаканни? Шухăшласа пăхсамăр, хуравне тупма вара Чăваш кĕнеке издательствинче нумай пулмасть пичетленсе тухнă «Ырă ĕçсен команди. Команда добрых дел» кĕнеке (тиражĕ – 1500 экземпляр) пулăшĕ. Унта вун висĕ калав кĕнĕ. Вĕсен авторĕ – Николай Ишентей.




Кĕнекери кашни хайлав сыпăçуллă та сĕтеклĕ чĕлхипе, сăнарсен хăйне евĕрлĕхĕпе илĕртет. Сăмахран, Дима, Рома тата Валерик пек ачасенчен тĕслĕх илес килет («Хĕвел пулса çÿрекенсем»). Харăссăн ĕçе пикенсе туххăмрах Çÿппи кинемин çĕр улмине пуçтарса кĕртеççĕ вĕсем. «Эй, савăнăç! Ку чухнехи ачасем хĕвел пулса çÿреççĕ», – хĕпĕртет ватă çын. Паллах, кун пек сăмахсем хыççăн тата маттуррах пулас килет. Теприне пулăшни хăвна та савăнăç кÿрет-çке-ха.

«Кентти пичче кăвакалĕсем» калав çут çанталăк илемне сăнама, унăн пурлăхне хаклама тата тавçăрулăха аталантарма хистет. Пĕчĕк Петюк пурнăçăн тĕрлĕ енне асăрхама тин вĕренсе пырать-ха. Çавăнпа чăпар чăх ертсе пыракан чĕпсем шыва сиксессĕн хăрасах ÿкет вăл. Пустуях пăшăрханнă иккен ача. Мĕншĕн-ши?

«Ырă ĕçсен команди» калав: «Ачасем, атьăр пĕрлешсе пурте тĕрлĕ ырă ĕç тума пуçлатпăр!» – шухăша çирĕплетет. «Йышра – вăй», – тесе ахальтен шахвăртман ватăсем.

Кĕнекери ытти хайлав та питĕ кăсăклă, вĕсен вырăсла куçарăвĕ илемлĕ, чăвашла текста çывăх. Кашниех ăса вĕрентет, мĕн те пулин çĕннине хыпарлать. Пуплевĕмĕр пуçламăшĕнчи ыйту патне тавăрнар-ха. «Çамрăк техниксем» калаври Тимур, Якур тата Атнер шăпах çавна сÿтсе яваççĕ. Кашниех хăйĕн карапĕ кирлĕрех те пĕлтерĕшлĕрех тесе шухăшлать. Чăнлăх патне тухма кружок ертÿçи Юрий Иванович пулăшать: «Çут çанталăкра пурăнма юрăхлă вырăн тупас тесен çыннăн вун-вун тĕрлĕ карап, çĕр-çĕр тĕрлĕ çÿрев аппарачĕ хатĕрлеме тивет. Çĕр çинче те, тÿпере те, шывра та шанчăклă çул хывсан кăна этемлĕх аслă тĕнчепе килĕшÿ тупма пултарĕ».

***Ольга ИВАНОВА.***

# Сăвăпа чĕрем юрлать

## Сивĕ хĕл

Сивĕ хĕл, сивĕ хĕл!
Мĕн чул ача ярăнать.
Сивĕ хĕл, сивĕ хĕл
Ачасене юратать.

Урамра шав кунĕпе,
Ачасем выляççĕ!
Симĕс елка умĕнче
Савăнса юрлаççĕ.

***Алексей ЯКОВЛЕВ.***
Тăвай районĕ,
Нўшкасси ялĕ.

## Сивĕ илем те хитре

Килчĕ хĕл васкаса,
Таврана шуратса.
Мĕн тери вăл хитре!
Савăк кулă питре.

Юрататăп хĕллене,
Унăн сивĕ илемне,
Тăвайккинчен ярăнма,
Юр кĕлеткесем тума.

***Олеся НИКОЛАЕВА.***
Элĕк районĕ,
Чăваш Сурăм шкулĕ.

## Тăван чĕлхем

Чăваш чĕлхине упраса,
Ăна чунтанах юратса
Тав тăватăп чĕререн,
Тайма пуçăм сана, Чăваш Ен.

Чăваш чĕлхи, чăваш чĕлхи!
Сана савса юрлатпăр.
Тăван чĕлхе, тăван чĕлхе!
Санпа эпир пурнатпăр.

Хамăр тăван çĕр-шывра
Калаçатпăр чăвашла.
Тăван халăх чĕлхине
Упрар ялан чĕрере.

***Анна АРТЕМЬЕВА.***
Элĕк районĕ,
Чăваш Сурăм шкулĕ.

## Ылтăн çĕр

Ылтăн çĕрĕм ман илемлĕ!
Вăл хитре мĕн пуррипе.
Уй-хирсем те илĕртеççĕ
Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечекпе.

Вăрмансем, ав, каш-кашлаççĕ.
Уйсенче комбайнсем
Тыр выраççĕ, пуçтараççĕ –
Çаралаççĕ уй-хирсем.

Ман çĕр-шывăм тĕрлĕ саслă,
Юхан шывĕсем таса.
Унăн пултăр ыр пуласлăх!
Юрататăп çĕр-шыва.

***Елена БУШУЕВĂПА***
***Наташа ВАСИЛЬЕВА.***
Элĕк районĕ,
Чăваш Сурăм шкулĕ.

## Ярăнма аван

Акă çитрĕ те хĕлле
Çынсене савăнтарса.
Вĕçтерем тăвайккине
Çунашкапа васкаса.
Кайрăм эп аналла,
Юр вĕçсе пырать кăна.
Куçăм умĕнче паян
Çут тĕнче ытла аван.
Пысăк савăнăç – хĕлле
Ярăнма çапла пĕрле!

***Оксана РОМАНОВА.***
Элĕк районĕ,
Чăваш Сурăм шкулĕ.

## Тăвайккинче

Килчĕç хĕллехи кунсем
Сивĕтсе те кĕскелсе.
Шăнса ларчĕç пĕвесем,
Савăнаççĕ ачасем.

Кантăкран эп пăхрăм та
Куртăм кўршĕ ачине.
Тухрăм эп те урама
Ярăнмашкăн конькипе.

Çунашка та илсе тухрăм,
Тăвайкки енне эп утрăм.
Ярăнăпăр халь каçчен,
Кăмăла тултариччен.

***Татьяна НИКОЛАЕВА.***
Элĕк районĕ,
Чăваш Сурăм шкулĕ.

## Салтак паттăрлăхĕ

Кукаçине курман эп нихăçан,
Юратнă асатте те çук халь ман.
Ылханлă вăрçă хирĕнчи суран
Ман чĕремре те тĕлкĕшет паян.
Тăван çĕр-шыв паттăрсене
манман,
Вĕсен ĕçне сума сăвать ялан...
Ан тив, эп вăрçă хирĕнче
пулман,
Ман чĕреме çавах кăшлать
суран.

***Оля АЛЕКСАНДРОВА,***
***7 класс.***
Шăмăршă районĕ,
Пăчăрлă Пашьел шкулĕ.



***© Саша СЕЙФУЛЛИН (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ўкерчĕкĕ.***

## Юр пĕрчи

Юр пĕрчи çĕр çине ўкет,
Ал çине лекет те ирĕлет.
Илĕртет вăл хăйĕн çутипе
Юр çинче утмашкăн кунĕпе.

Юр пĕрчи ташлать илĕртсе,
Хĕвел çутинче чўхенсе.
Хăйĕн сывăх юлташĕсемпе
Илем кўрет вăл тĕнчене.

## Каç

Шăплăх карса илчĕ
Ыйхăллă яла.
Тĕттĕм пулса килчĕ
Йĕри-тавралла.

Çутă çăлтăр çутрĕ
Хăйĕн çутине.
Çут çанталăк путрĕ
Тарăн ыйхине.

## Ан кашла-ха, çил

Ан кашла-ха, çилĕм,
Ан вăрат яла.
Ир те килсе çитĕ
Часах хăнана.

***Ксения МАТВЕЕВА.***
Шăмăршă районĕ,
Пăчăрлă Пашьел.

## Манăн асатте

Аслă вăрçă пуçлансан
Ытти çамрăксемпе тан
Ман хăюллă асатте
Вăрçа тухса каяс тет.

Хуласене, çĕр-шыва
Тăшмансенчен тасатса
Берлин таранах çитет,
Çĕнтерў кĕтсе илет.

Кăкăр тулли медальпе
Таврăнать тăван киле.
Унăн паттăрлăхĕпе
Мухтанатпăр çемйипех.



***Ирина СИДОРОВА.***
Канаш районĕ,
Энтрияль шкулĕ.

## Асамлă чăваш тĕрри

Нумай-нумай та урлă пирлĕ
Çўрерĕм эпĕ тĕнчере.
Епле çыруллă та эрешлĕ,
Аваллăхăн тĕрри хитре.

Ун пек чипер, ун евĕр хўхĕм,
Илемлĕ тĕрĕ çуккине
Пĕлсе тĕрлет асра юлмалăх
Кашни чăваш çак çĕр çинче.

Нумай-нумай та урлă-пирлĕ
Çўрерĕм эпĕ тĕнчере.
Анчах ниçта курмарăм пирĕн
Чăваш тĕрри пек чаплине.

***Глафира РАСКИНА,***
***2 класс.***
Çĕмĕрле районĕ,
Хутар шкулĕ.

## Хĕлле

Хĕл кунĕсем çитсессĕн
Пите сивĕ чĕпĕтет.
Юр пĕрчи ўксессĕн
Манăн чунăм хĕпĕртет.

Çунашкапа ярăнма
Вĕçтеретпĕр çырмана.
Тусăм, тухсам урама
Хĕл кунĕпе савăнма.

***Анна МИХЕЕВА.***
Елчĕк районĕ,
Кушкă шкулĕ.

## Кукамай

Кўршĕ ялта, çывăхрах
Пурăнатчĕ кукамай.
Тинкеретчĕ яланах
Вăл пире кĕтсе пĕрмай.

Ун сăнарне нихăçан
Эп кăлармăп асăмран.
Текех çук вăл пирĕнпе,
Тухас çук хапха умне.

***Александр ПЛАСКИН.***
Елчĕк районĕ,
Кушкă шкулĕ.

## Хĕл илемĕ

Ах, епле-çке хĕл илемлĕ,
Чунăма савăнтарать.
Вĕлтĕр-вĕлтĕр лĕпĕш сĕмлĕ
Юр пĕрчи çилпе вылять.



***© Анжелика ИВАНОВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ўкерчĕкĕ.***

## Чăрăш

Чăрăш ўсет пирĕн умра,
Вăл мĕнле илемлĕ,
Сивĕ çилтен хăраса
Шурă юр пĕркеннĕ.

Ун пĕркенчĕкне вара
Кĕмĕлтен çĕленĕ,
Тĕрлĕрен мерчен хушса
Тĕрĕ пек тĕрленĕ.

## Уйăп – улăп

Çил вылять. Палан çинче
Кăвар пек хĕп-хĕрлĕ уйăп.
Илтĕнет юрри инçе,
Ун çине пăхсан вăл – улăп.

## Хĕллехи савăнăç

Юлташсем ман ярăнаççĕ
Йĕлтĕрпе, çунашкапа,
Çил çунат пекех анаççĕ
Çўллĕ сăртран ашкăнса.
Кăшкăраççĕ, шуйхăшаççĕ,
Кукăль-макăль çаврăнаççĕ.

***Ксения НИКОЛАЕВА,***
***2 класс.***
Канаш районĕ,
Катек шкулĕ.

## Кайăксем те юрламаççĕ

Илтĕнмест уйра машин кĕрлевĕ,
Кайăксем те юрламаççĕ тек.
Çитрĕ кĕркунне –
салхуллă кĕвĕ,
Шаннă, типнĕ пахчара чечек.

## Манăн паян уяв

Тинех çитрĕ кĕтнĕ кун,
Ман паян çуралнă кун.
Вăрансассăн ирхине
Куртăм хĕвел шевлине.



***© Юля КУЗЬМИНА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ўкерчĕкĕ.***

Хатĕрленĕ ман валли,
Кукăль-çимĕç куç тулли.
Тем те пур сĕтел çинче,
Пысăк торт – чи варринче.

Хĕрлĕ роза чечекне
Парнелерĕ асанне.
Анне пачĕ шур кĕпе,
Сунчĕ сывлăх, телейне.

Килсе çитрĕç тантăшсем,
Манăн сывăх юлташсем.
Юрласа та ташласа,
Уяв иртрĕ савăнса.

***Наташа ХРИСТОФОРОВА,***
***7 «б» класс.***
Вăрмар районĕ,
Пысăк Енккасси шкулĕ.

## Кăмпасем

Кăмпасем, кăмпасем
Эпĕ пуçтаратăп.
Кăраççсем, уплюнккасем –
Пурте тутлă-çке вĕсем!

Чупа-чупа шыратăп.
Аннене те пулăшатăп,
Çырлине те тĕл пулатăп:
Чи хĕрли те чи тутли –
Пĕчĕк йăмăкăм валли.



***© Маша КОШЕЛЕВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ўкерчĕкĕ.***

## Çерçисем

Çерçисем çĕр çинче
Сиккелесе çўреççĕ.
Хырăм выçса çитиччен
Тулă пĕрчи кĕтеççĕ.
Тăраничченех çисен
Тек чĕвĕлтетеççĕ.

## Ирхине

Ирхине ирех тăратăп,
Кантăкран тўрех пăхатăп.
Ах, унта шур юр çăвать –
Чунăм урама туртать.

Хăвăртрах тухас килет,
Ман юрпа выляс килет.
Çил-тăманĕ вĕçтерет,
Питĕме вăл хĕретет.

Çавăн пекех хĕл иртет,
Çуркунне часах çитет,
Тĕнчене илем кўрет,
Пур тавра та чĕрĕлет.

***Кирилл ВАСИЛЬЕВ,***
***4 «г» класс.***
Вăрмар районĕ,
Вăрмар шкулĕ.

## Анне

Аннене эп юрататăп,
Яланах савăнтаратăп:
«Пиллĕк» паллăпа кăна
Вĕренетĕп эп шкулта.

Анне ман шкулта ĕçлет,
Ачасене вĕрентет.
Мана ăшшăн çупăрлать,
Майĕпен пуçран шăлать.

Аннене эп пулăшатăп,
Чашăк-тирĕке çăватăп,
Ырăнсене пуçтаратăп,
Шкулалла та пит васкатăп.

Аннепе эп мухтанатăп,
Савăнтарма тăрăшатăп.
Аннепе мăнаçланатăп,
Ырлăх-сывлăх çеç сунатăп.

***Кирилл ВЕНИКОВ.***
Елчĕк районĕ,
Кушкă шкулĕ.

## Асаннеçĕм, асанне

Яланах ура çинче–
Пахчара, кил картинче.
Пирĕншĕн чăн-чăн парне –
Асаннеçĕм, асанне.

Эпĕ ăна юрататăп,
Вăл пурришĕн савăнатăп.
Хаçатсем вулать нумай,
Ал ĕçне тăвать пĕрмай.

Çумăр хыççăн – кăмпара,
Кун хĕвеллĕ – çырлара.
Каçпа шыв йăта-йăта
Шăваратăп купăста.

Пул ялан эс пирĕнпе,
Пурăн çутă телейпе.
Ан пĕлсемччĕ чир мĕнне,
Асаннеçĕм, асанне.

***Наташа ХРИСТОФОРОВА,***
***7 «б» класс.***
Вăрмар районĕ,
Пысăк Енккасси шкулĕ.

Тантăш 9
7 №, 2014, нарăс 20

# Ырă вăрлăх ырă çимĕç парать



**Ку çĕр-шыв паян та пăлхавлă, вăрçă-харçăллă регионсен шутĕнче. Америкăн хĕç-пăшаллă çарĕсем терроризмăн йăвине аркатма пуçланă операцие çаплах вĕçлеймеççĕ-ха. 1979 çулхи раштав вĕçĕнче Совет Союзĕ те кунти çивĕчленсе çитнĕ лару-тăрăва çăмăллатас тата ăна йĕркелес тĕллевпе сăртлă-туллă çĕр-шыва хăйĕн артиллерийĕпе мото-пехотине тата сывлăш çар вăйĕсене илсе кĕчĕ. Вунă çула яхăн пынă юнлă хирĕç-тăрăвăн вут-çулăмĕ витĕр пилĕк çĕр çирĕм ултă пин совет салтакĕпе офицерĕ тухнă, вун пилĕк пин те вун пиллĕкĕшĕ тăван кĕтесне тупăксенче таврăннă, алă тăватă пин салтак йывăр аманса ĕмĕрлĕхех сусăрланса юлнă, тăват çĕр вун ултă пин чирлесе таврăннă.**

Нарăсăн вун пиллĕкмĕшĕнче пирĕн республикăра кăна мар, Раççей Федерацийĕнче те интернационалист салтаксене сума суса Асăну кунĕ иртрĕ. 1989 çулта Совет çарĕн сахал йышлă контингентне Афганистанран илсе тухнăранпа çирĕм пилĕк çул çитрĕ. Пирĕн республикăра çуралса ӳснĕ ултă пине яхăн яш-кĕрĕм те аякри çĕр-шывра душмансемпе çапăçнă, вĕсенчен çĕр вун саккăрăшне тăван кĕтесе чĕррĕн таврăнма пӳрмен, тăваттăшĕн çулĕ каялла выртман – хыпарсăр çухалнă, çĕр çитмĕл улттăшĕ аманнă, çĕр вун тăвата яш инвалид пулса юлнă, тăват çĕр вăтăррăн таврăнсан тĕрлĕ чир-чĕре пула пурнăçран уйрăлнă.

Шел те, эпир, хальхи çамрăксем, чылайăшĕн ятне-шывне те пĕлместпĕр. Çавăнпа та ачасен патриотлăх туйăмне аталантарас тĕлĕшпе Татьяна Васильевна Горбунова пулăшнипе «Шырав» операци йĕркелерĕмĕр. Унăн ячĕ «Интернационалист салтаксем». Афганистан вăрçине хутшăннă çынсем çинчен нумайрах пĕлесси, шкул музейĕ валли материал пуçтарасси, пире, ачасене, патриотла воспитани парасси, тĕпчев ĕçне хăнăхтарасси – унăн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри. Ачасем интернационалист салтаксенчен пĕрне суйласа илеççĕ те шырав ĕçне пуçласа яраççĕ. Çак вăхăтра эпир пĕр салтакпа тата унăн тăванĕсемпе тĕл пулса калаçрăмăр. Инçетрен янă çырăвĕсемпе, сăн ӳкерчĕкĕсемпе, наградисемпе, тĕрлĕ документчĕпе паллашрăмăр, салтак çемйин шăпипе те кăсăклантăмăр, ăçта пурăннине ыйтса пĕлтĕмĕр.

Мăн Этмен ял тăрăхĕнчен те чылай çамрăк лекнĕ çак аякри çĕре. Вĕсен шутĕнче Николай Охтеркин, Виталий Богатеев, Юрăпа Валера Ельмовсем, Олег Федоров, Александр Фондеркин, Николай Венедиктов. Çаксем пурте, турра шĕкĕр, тăван яла чĕрĕ-сывă таврăннă.

Манăн Олег Анатольевич Федоров çинчен калас килет. Интернационалист салтак 1964 çулхи çĕртме уйăхĕн тăваттăмĕшĕнче Шĕмшеш ялĕнче кун çути курнă. 1971 çулта ытти юлташĕ пекех сумка йăтса шкула чупнă. 1981 çулта аван паллăсемпе шкултан вĕренсе тухнă. Паллах, хăйĕн вăхăтĕнче вăл пĕр-пĕр аслă шкула кĕрсе салтак тумне тăхăнассинчен пăрăнса юлма е хальхи хăш-пĕр çамрăк пек пысăк вырăнта ĕçлекен тăванĕсен анлă çурăмĕ хыçне пытанса çĕр-шыв умĕнчи тивĕçне пурнăçлассинчен пăрăнма пултарнă. Анчах асаттесен паттăрлăхĕсем çинчен каласа панисене ăша хывса ӳснĕскер чи малтанах кăмăл-туйăма çирĕплетекен шкул витĕр тухма тĕв тунă.

Ят тухнă чăваш каччине 1982 çулхи хура кĕркунне, салтак тумĕ тăхăнтартса, ик çĕр ытла чăваш салтакĕпе пĕрле, Афганистан çĕрне çитиех илсе каять шăпа. Полксем Пули-Хумри хулинче вырнаçнă. Йĕри-тавра хăмăшлăх, нимĕн те курăнмасть. Ахальтен мар акăлчансем ăна «Вилĕм лапамĕ» ят панă. Шăпах çакăнта виç çĕр çул каялла вĕсем тифпа чирлесе вилнĕ иккен. Пĕр-икĕ эрне канлĕ çывăрайман салтаксем. Душмансем кăнтăрла мирлĕ халăх пекех, каçхине вара тусем çине хăпарса пирĕннисене хĕç-пăшалтан пеме тапратнă. «Çавăнпа хамăр та каçхи вунă сехетрен пуçласа ирхи пилĕк сехетчен персех тăраттăмăр», – тет интернационалист салтак. Пурне те тĕплĕ, вăхăтра пурнăçлама хăнăхнăскере кĕçех çар чаçĕнче машина колоннисемпе пĕрле кайма шанаççĕ.

«Афганистанри вăрçă пирĕншĕн питĕ йывăр килчĕ. Мĕншĕн тесен чуллă-сăртлă çĕр-шывăн пĕтĕм лаптăкне туллин «сăнаса» тăрайманран, унти халăхăн йăли-йĕркине, шухăшлавне пĕлменрен эпир тăтăшах йывăр çухатусем тӳснĕ, душман кăнтăрла суту-илӳ тунă, каçхине автомат тытнă. Вăл пирĕн çинчен пĕтĕмпех пĕлнĕ, эпир ун çинчен – нимĕн те. Çавна пулах мĕн чухлĕ пурлăх пĕтрĕ, мĕн чухлĕ çамрăк пурнăçĕ татăлчĕ! Йывăр пулнă, чăтнă, салтак вĕт, – ассăн сывласа каласа парать Олег Анатольевич. – Чăваш салтакĕсене, уйрăмах хамăр район каччисене, курсан тем пек савăнаттăмăр. Туканашри Миша Кряжинпа, Хĕрлĕ Чутайри Сергей Араслановпа, Каркçырмари Владик Жуковпа тата Юрка Михеевпа паянхи кун та çыхăну татмастпăр, тăван пекех туйăнаççĕ вĕсем. Çанталăкĕ питĕ шăрăхчĕ, 45 градус таран ăшă тăратчĕ. Çавна май маляripe, тифпа тата сарамакпа чирлекен те нумайччĕ. Эпĕ те çирĕм пĕр кун чирлесе госпитальте выртса тухрăм».

Интереслĕ ĕç те сахал мар пулса иртнĕ служба вăхăтĕнче. Пĕррехинче О.А. Федоров чаçре виçĕ пуля выртнине курнă, вĕсене тӳрех командира илсе панă. Лешĕ вара тарăхса кайнă та: «Кунта выртакан япаласенчен нимĕн те тĕкĕнме юрамасть! Тен, вĕсенче бомба?» – тенĕ çирĕппĕн.

Пĕр задание кайсан салтаксем айлăма вырнаçнă. Унта çĕлен чылай пулнă. Тахăшĕ тем самантра пĕрне вĕлернĕ. Каç пулсан салтаксем темĕнле чăштăр-чăштăр сасăпа вăраннă та курах кайнă: йĕри-тавра çĕлен. Вĕсем хăйсен тусне вĕлернĕшĕн тавăрма килнĕ иккен. Çаксене гранатăпа сирпĕтсе ирĕксĕрех урăх вырăн шырама тивнĕ вара.

Нихăçан манми кун. Полка Афганистан çĕрĕнчен илсе тухнă кун тамăкран хăтăлнисем чунтанах савăннă, унта юлакансем вара хурланнă.

Олег Федоров пурнăçне тĕплĕнрех пĕлес тесе эпĕ амăшĕпе те, Татьяна Якимовнăпа, калаçрăм. Шухăшласа ларнă хыççăн вăл çапла хуравларĕ: «Олег ĕçпе пиçĕхсе ӳсрĕ, ытти ачапа питĕ туслăччĕ. Пĕр-пĕр ĕçе пуçăнсан вĕçне çитерме тăрăшатчĕ, пысăк çын пекех ĕçлетчĕ. Лашапа утă-улăм турттарма питĕ килĕштеретчĕ. Ас тăватăп-ха, пĕррехинче утпа вĕçтерсе çитрĕ те лешĕ тӳрех чарăнса ĕлкĕрейменнине кура персе анчĕ. Пӳрте кĕчĕ, шăп-шăпăрт. Хăйĕн мĕнле ыратнă пулĕ», – паянхи кун та çавăншăн шеллет ывăлне амăшĕ.

Çав вăхăтра колхозра кашни çулах çĕр улми çитĕнтерсе пуçтарса кĕртме норма панă. Ашшĕ-амăшĕ ачисене те ĕçе явăçтарнă. «Пĕррехинче манăн Олег темĕншĕн çĕр улми пуçтарма пымарĕ. Те тарăхнипе, те хăратасшăн пулнипе киле çитсен: «Сана, салтака юрăхлă пулсан, военкомата кайса Афганистана яма калатăп!» – терĕм ăна. Кайран нумай кулянса макăртăм. Эпĕ калани çитрĕ пулĕ», – тет Татьяна Якимовна.

Икĕ çул службăра тăнă хыççăн офицерсем Федоров салтака контракт çырса çартах юлма сĕннĕ, анчах тăван еншĕн тунсăхласа çитнĕ яш киле таврăнас тенĕ. Кунта малтан Çĕмĕрлери милици уйрăмне ĕçе вырнаçнă. Савнă хĕрĕпе Любовь Валерьевна Таланцевăпа çемье çавăрса икĕ пăхаттир ывăл çитĕнтернĕ.

Патруль ĕçченĕсемшĕн кашни дежурство ятарлă занятирен пуçланать, полици ĕçченĕсене табель хĕç-пăшалĕпе усă курма, кĕрешӳ-тытăçу мелĕсене вĕрентеççĕ. Пурне те асăнса пĕтереймĕн.

Шалти ĕçсен министерствин тытăмĕнче Олег Анатольевич çирĕм виçĕ çул тăрăшать ĕнтĕ. Çак ĕç, чи малтанах, çынсемпе хутшăнма май пуррипе илĕртет, час-часах çынна пулăшма тивет, йĕркелĕхе, саккуна пăсакансемпе те куллен курнăçмалла. Интернационалист салтакăн пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ – çирĕм тăхăр çул.

Ашшĕпе амăшĕн ырă ятне упракансем, вĕсен чыс-сумне çĕклекенсем, ĕçне малалла тăсакансем – паллах, вĕсен ачисем. Андрей Чулхулари ШĔМ академийĕн Шупашкарти филиалĕнчен вĕренсе тухса тĕп хуламăртах йĕрке хуралĕнче ĕçлет. Вăл – участковăй, аслă лейтенант. Каччă питĕ пултаруллă, вĕренме маттур, юрраташша ăста. Вăл хут купăс тăсса ярсан пĕтĕм чун хĕпĕртет.

Кĕçĕнни Женя вара И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн истори факультетĕнчен вĕренсе тухнă, Оренбург облаçĕнче хĕсметре тăрать, сержант ятне илет. Сочире иртекен Хĕллехи Олимпиадăра йĕрке хуралĕнче ĕçлет. Федоровсен кил-çурчĕ Шĕмшеш ялĕн варринче, сăртлăрах вырăнта вырнаçнă. Тахçан ача сасси шавласа-кĕрлесе тăнă кунта, халĕ вара Олегпа юратнă мăшăрĕ тата амăшĕ пурăнаççĕ. Ачисем кичемленме памаççĕ, килсе пулăшсах тăраççĕ. Олег Анатольевич хăйĕн пурнăçĕпе кăмăллă: «Пӳрт çывăхĕнче вуншар йывăç лартрăм, атте-анне пулăшнипе капмар çурт çĕклерĕмĕр, мăшăрăмпа вара икĕ ывăл çитĕнтертĕмĕр, юратнă мăнук мана: «Маçак», – тесе чĕнни темрен паха. Куç тулли телей вĕт-ха! Апла тăк пурнăç ахаль иртмест, ырă вăрлăх ырă çимĕç парать».

***Анна МИХЕЕВА.***

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Мăн Этмен шкулĕ.

# Сочири Олимпиадăшăн Çĕньял Покровскисем те савăнаççĕ



Шупашкар районĕнчи Çĕньял Покровски шкулне Сочири Олимп çулăмĕн факелĕ килсе çитрĕ. Çак ятпа эпир тĕрлĕрен ĕç-пуç ирттертĕмĕр. Спорт ăмăртăвĕсене вĕренӳ ĕçĕ-хĕлĕпе пĕрлештертĕмĕр. Хĕç-пăшал вăйĕсен подполковникĕ, пĕрремĕш штурм пайĕн ертӳçи Анатолий Дмитриевич Тапиров тата унăн спецназ ушкăнĕ Сывлăх кунне ирттерме пулăшрĕç. Шкул ачисем пирĕн спортсменсене Хĕллехи Олимп вăййисенче ăнăçу сунса «Телей йывăçĕн» тураттисене ылтăн, кĕмĕл тата пăхăр тĕслĕ хăюсемпе çыхса илемлетрĕç. Ун хыççăн «Пучах» чарăнуран пуçласа шкул картишне çити факел йăтса чупас эстафета иртрĕ. Унта район, республика тата регионсем хушшинчи ăмăртусенче вырăн йышăннă шкул спортсменĕсем тата вĕренӳ отличникĕсем çеç хутшăнма тивĕçрĕç. Пур класс та «Сочи-2014» Олимп факелĕпе асăнмалăх сăн ӳкерĕнчĕ.

Кĕçĕн ӳсĕмри вĕренекенсем йĕлтĕрпе чупрĕç. 5-7 класс арçын ачисем вара хоккейла вылярĕç. Çак кун шкул ачисем конькипе ярăнмалла та ăмăртрĕç. Ăс-тăна ĕçлеттерме юратакансем вара шашка-шахматла выляса тупăшрĕç. Сĕтел çи теннисĕпе туслисем те чун киленĕçне тупрĕç. Сывлăх кунĕ питĕ хаваслă та усăллă иртнишĕн чунтан савăнатпăр.

***О.ИЛЬИНА,***
***шкул директорĕн çумĕ.***

# Вăл тĕнчене кўнĕ пĕртен пĕр инкек – унăн вилĕмĕ



Марк Твен – 1835-1910 çулсенче пурăннă Америка çыравçи, ача-пăчана çеç мар, аслисене те тыткăнлакан Том Сойер тата Гекльберри Финн мыскарисем çинчен калакан роман авторĕ. Унăн чăн ячĕ – Сэмюэл Ленгхорн Клеменс. Ачалăхне Миссисипи юхан шывĕн хĕрринчи пĕчĕк çеç Ганнибал хулинче ирттернĕ. «Марк Твен» тесе карапсене иртме май паракан шыв тарăнăшне каланă. Эппин, çыравçа хушма ятне шăпах юхан шыв парнеленĕ.

Марк Твен хайлавĕсене ачалăхри аса илўсенчен чăн пулнă самантсем те кĕнĕ. Том Сойер çинчен çырнă чухне ум сăмахра вăл çапла каланă:

«Çак кĕнекери мыскарасенчен чылайăшĕ чăнласах пулнă: иккĕшĕ-виççĕшĕ – хампа, ыттисем вара – шкулти юлташăмсемпе».

Том Сойер ячĕпе тўрех висĕ уйрăлми туса, пиратсене тата «ырă» вăрă-хураха выляма юратаканскерсене, сăнласа панă:

Сэм Клеменс (шăпах вăл кушака эмел ĕçтернĕ, кĕсйине çĕленсемпе тата çара çерçисемпе тултарса киле илсе кĕнĕ);

Сэмăн шкулти юлташĕ – Уилли Боуэн;

Томас Сойер Спиви – пысăк ашкăнчăк тата пуçтах ача. Бекки Тэчер сăнарне кўршĕре пурăнакан Лаура Хокинсран илнĕ. Гек Финн – Том Бленкеншип портречĕ. Вăл хула хĕрринчи çурма арканнă хăлтăр-халтăр пўртре пурăннă, çăвара тĕпренчĕк яманни те чылай пулнă, çĕтĕк-çатăк тăхăнса çўренĕ, хăш чухне таса тўпе айĕнчех çĕр каçнă. Анчах ăна çак пурнăç килĕшнĕ, вăл «ирсĕр те пăчă пўртсене» юратман. Томăн шăллĕ вара çăхавлама юратакан йăваш ача Сид – Сэмюэль Клеменсăн шăллĕ Генри. Шухăшласа кăларнă ашкăнчăк ачапа танлаштарсан вăл ашшĕ-амăшне нихăçан та тарăхтарман. Çирĕп кăмăллă Полли аппан прототипĕ – Марк Твен амăшĕ, Оливия Клеменс.

Çав вăхăтранпа Ганнибалта нимĕн те улшăнман. Кунта çўллĕ çуртсем çук. Туристсене Марк Твен романĕнчи ĕçсем ăçта пулса иртнине кăтартаççĕ: Клеменс çемйи пурăннă икĕ хутлă çурт, чее Том сăрлама панă хапха, Грант тухтăрăн аптеки... Гек Финнăн ĕçкĕçашшĕн хăлтăр-халтăр пўрчĕ сыхланса юлман, ăна иртнĕ ĕмĕрĕн хĕрĕхмĕш çулĕсенче йăтса антарнă. Ун вырăнне халĕ асăну хăми вырнаçтарнă. Хилл-стритри чи илемлĕ çурт Лора ашшĕн Хоукинс судьян пулнă.

Марк Твен пурнăçĕ – пысăк та кăтартуллă. Çыравçă пĕтĕм тĕнчене курса çаврăннă. Лоцман пулăшуçи, хаçатçă пулса ĕçленĕ вăл, хăйне усламçăра та тĕрĕсленĕ, анчах ăнăçлах мар. Литературăна пула ăна пĕтĕм тĕнче пĕлме тытăннă. Америкăна каякансем Ниагар шыв сиккине тата... Марк Твена курма ĕмĕтленнĕ.

Çивĕч чĕлхине пăхмасăрах ăна тăшманĕсем те хисепленĕ. Твен пурнăçран уйрăлсан унăн çывăх юлташĕ Уилбер Несбит çапла каланă: «Марк Твен тĕнчене кўнĕ пĕртен-пĕр инкек – унăн вилĕмĕ».

Марк Твен Ганнибал хулинче вун тăватă çул çеç пурăннă пулсан та ăна ĕмĕрлĕх чап парнеленĕ. Çак хулара Гекльберри Финнпа Том Сойера халалласа лартнă палăк та пур.

## Марк Твен çапла каланă

**Ырăлăха хăлхасăрри те илтет, куççăрри те курать.**

Хăвăра шанма пăрахтарасшăн çынсенчен асăрханăр. Пысăк çын, пачах тепĕр май, эсир те пысăк пулма пултарасса ĕненет.

**Сывлăхлă пулма вĕрентекен кĕнекесене вуланă чухне асăрханулла пулăр, тĕрĕс мар пичетленнĕ пĕртен-пĕр сас палли те пурнăçăра пĕтерсе хума пултарĕ.**

Шăп пул та ухмах пек курăн, унсăрăн эсĕ çăварна уççанах пĕтĕм иккĕленў сирĕлĕ.

**Хуйха-суйха пĕччен те чăтса ирттерме пулĕ, анчах савăнăçа туллин туйса илес тесен ăна кампа та пулин пайламаллах.**

Яланах тĕрĕссине калăр, вара ним те ас туса юлма кирлĕ мар.

**Эсир хăвăр пуринпе те килĕшнине асăрхарăр пулсан ку вăл улшăнма вăхăт çитнине пĕлтерет.**

Урамра выçă йытта тĕл пулса ăна тăрантарсан, ачашласан вăл сана нихăçан та çыртмĕ; çын пирки вара çакна çирĕппĕнех калаймăн.

**Пур чĕр чунран этем – чи тискерри. Вăл кăна теприне асаплантарнипе киленет.**

Эпĕ вун тăватă çулта чухне манăн атте питĕ айванччĕ, эпĕ ăна аран чăтса ирттереттĕм. Çирĕм пĕрре тултартăм та тĕлĕнсе пĕтерейместĕп – çак çичĕ çул хушшинче атте мĕн тери ăслăланнă-çке!

**Иккĕленетĕн пулсан тĕрĕссине кала.**

Инкек чăтса ирттерекенсем ыттисене лăплантарма та пĕлеççĕ.

**Никам курман пек ташла, никам илтмен пек юрла, сана нихçан та ыррату кўмен пек юрат, çĕр çинчех çăтмах пулнă пек пурăн.**

Этемĕн хăватлă хĕç-пăшал пур, вăл – кулă.

**Шăв-шав нимĕн те кăтартса памасть. Хăш чухне чăх çăмарта тăвать те хăй планета кăларса ўкернĕнех кăтиклетет.**

## Çыравçă пурнăçĕнчи хăш-пĕр самант

*Çак çыравçă сăнлă çын Америкăра, ахăртнех, нумай пулнă. Вĕсенчен çыру та сахал мар килнĕ. Пĕрне Марк Твен çапла хуравланă: «Хаклă сэр. Сире çырушăн тата сăн ўкерчĕкшĕн тав тăватăп. Эсир, чăнах та, манпа пĕр сăнлă. Иксĕмĕр хире-хирĕç тăрсан эпĕ сирĕн çине пăхса сухал хырма та пултаратăп-çке».*

*Марк Твен ятсăр çыру илнĕ. Унта пĕр сăмах çеç пулнă: «Сысна». Çакăн пирки çыравçă хаçатра çапла пĕлтерў панă: «Час-часах ман пата çыракансем хăйсен ятне палăртмаççĕ. Пĕррехинче вара пачах тепĕр май пулса тухрĕ: çыраканĕ хăйĕн ятне кăна палăртнă».*

*Марк Твен пĕр пикене мухтанă: «Эсир питĕ илемлĕ!» Анчах та ку хĕр çыравçа килĕштерекенсен шутне кĕмен. Ăна сăпайлă та тееймĕн. «Шел, сирĕн пирки çавнах калаймастăп», – таврăнă вăл. Марк Твен çухалса кайман: «Эсир ман пек тăвăр, суйăр!» – тенĕ.*

*Марк Твен чугун çулпа Франци тăрăх çўренĕ чухне проводника Дижона çитсен вăратма ыйтать. Унăн çавăнта тухмалла иккен. Ирхине пуйăс Парижа çитсе пынă чухне тин вăранать çыравçă, Дижонран иртсе кайнине ăнланса илет. Вăл кăмăлсăр пулнине хирĕç проводник çапла хуравлать:*

*– Сире тивĕçтерейменшĕн каçару ыйтатăп, месье. Паянхи кунăм питĕ ăнăçсăр. Сирĕн ентешĕре Дижонра антарса хăвартăм, вăл та темшĕн хытах тарăхрĕ.*

*Пĕр хитре пике Марк Твенран ыйтать:*

*– Çынсем упăтерен пулса кайнă тени тĕрĕс-и?*

*– Тĕрĕс.*

*– Пурте-пурте-и? Эпĕ те-и?*

*– Çапла, анчах эсир илемлĕ упăтерен пулнă.*

*– Сирĕн ăс-тăн нумай, укçăр вара сахал. Çакна мĕнле ăнланмалла?! – тесе ыйтать пĕр банкир Марк Твенран.*

*– Куратăр-и, – тет çыравçă. – Çут çанталăк пĕтĕмпех шайлаштарма юратать. Вăтамран илсен эпир иксĕмĕр те пĕр тан.*

*Марк Твен 1835 çулта çуралнă. Шăпах çав çул Çĕр çумĕнчен Галлея комета вĕçсе иртнĕ. «Эпĕ вăл тепре вĕçсе иртнĕ чухне вилĕп», – тенĕ çыравçă. 1910 çулта, чăнах та, çапла пулнă.*

---

ПĔЛМЕ ИНТЕРЕСЛĔ

# Пĕрешкел юр пĕрчи курнă-и?



Пĕчĕк юр пĕрчирен çăмăлраххи мĕн пур-ши? Алă çине ўкнине сиссе те юлаймастăн. Йывăрăшĕ миллиграмм чухлĕ çеç.

Эпир вĕсене сайра-хутра кăна сăнатпăр. Лайăххах пăхсан вара кашниех хăйне евĕр пулнине асăрхатăн, пĕрешкел юр пĕрчисем çук.

Малтанах вĕсем питĕ пĕчĕк тата ултă кĕтеслĕ. Кайран кашни кĕтесĕнченех пĕр пек пăрлă йĕп ўсме тытăнать, сывлăш температурипе нўрĕк пĕрешкел пулнăран вĕсем уйрăлса тăмаççĕ. Çав йĕпсем татах туратланаççĕ. Çапла вара юр пĕрчи пысăкланса пырать, ултă кĕтеслĕ кўлеперен ултă пайăркаллă пулса тăрать.

Пĕлĕт ăшĕнче çўлелле тата аялалла куçса çўренĕ май вăл тĕрлĕрен температурăна тата нўрĕклĕхе лекет, çавăнпа кўлепи те улшăнать. Юр пĕрчисем расналанса каяççĕ. Çĕр çине кашни хăйĕн çулĕпе ўкет. Ку та кўлепене витĕм кўрет, паллах. Сывлăшра чухне вăл тăтăшах улшăнать.

Юр пĕрчи витĕр курăнакан пăртан пулать. Анчах вĕсем нумай чухне хĕвеле пула шурă тĕслĕ курăнаççĕ. Сивĕннĕ пĕчĕк шыв тумламĕпе тĕл пулсан юр пĕрчин кўлепи ансатланать, пысăкки тĕлне лексен вара – пăрлă çаврашка пулса тăрать.

Çанталăка кура тĕрлĕ çĕрте хăйне евĕр юр çăвать. 1944 çулхи çуркунне Мускаврва вунă сантиметр пысăкăш юр пĕрчисем ўкни паллă. Çĕпĕрте вăтăр сантиметрлисене те асăрханă. Çил пачах та çук чухне çапла пулма пултарать. Юр пĕрчисем сывлăшра нумайччен çаврăнаççĕ, хăпараççĕ те анаççĕ, пĕр-пĕрне çапăнаççĕ е çыпăçса лараççĕ. Çил тухсанах çакăн пек лапка-лапка юра темиçе пая пайласа ярĕ.

# Салтак пурнӑҫӗ

## Калав

Геннадий ЭСЕКЕЛ

**(Малалли. Пуҫламӑшӗ 4-6-мӗш номерсенче).**

Вӑйлӑ ҫиле парӑнтараймарӗ, парашют куполне тем пек тӑрӑшсан та сӳнтерме вӑй-хал ҫитмерӗ унӑн. Тарӑн юр ӑна ура ҫине тӑратмарӗ. Сӳнмен парашют пысӑк хӑвӑртлӑхпа уйрӑм ӳссе ларнӑ ҫӳллӗ хыр йывӑҫҫи патне сӗтӗрсе пырать. Пулӑшма чупакансем ытла инҫе пулнӑран, чупса ҫитме ӗлкӗреймерӗҫ. Мӗскӗне пысӑк хӑвӑртлӑхпа хырпа ҫапӑнтарчӗ...

«Отбой!» – пулчӗ приказ. Нумайӑшӗ кӗтрӗ ҫак саманта. Темиҫе ҫӗр ҫын пурнӑҫӗ ҫӑлӑнса юлчӗ.

Ҫуркунне! Балтика тӑрӑхӗнче ҫак вӑхӑт питӗ илемлӗ. Ҫӑтмахри пек тавралӑх. Каштансем, сиреньсем, шурӑ акаци, улмуҫҫи, чие йывӑҫҫисем шап-шурӑ чечеке. Ҫӗрӗпе, ирччен шӑпчӑк юрри чуна хумхантарать. Тӗрлӗ вӗҫен кайӑк сасси... Полк чечек ӑшне путнӑ тейӗн. Таврара тӗлӗнмелле ырӑ шӑршӑ, хӑш чухне пуҫа анратать. Хӑвна ҫӑтмахри пек туятӑн. Ҫав вӑхӑтра чунра тунсӑх хуҫаланать...

Каунаспа сыв пуллашмалли вӑхӑт ҫывхарса килет. Медицина курсӗ вӗҫленмелле. Батальонсем экзаменсене хатӗрленеҫҫӗ. Плац ҫинче стройпа тикӗс утмалли занятисем кашни кун пыраҫҫӗ. Халтан яракан маршировкӑсем ура тӗпне ҫунтараҫҫӗ. Атӑ кӗллисем хӑпӑнса ӳкеҫҫӗ. Пирӗн ҫумри связистсем плац ҫинче строй юррине шӑрантараҫҫӗ. Медиксен батальонӗ те «Бородино» юрра вӗренме пикенчӗ. «Бородино» кинофильмри хорпа юрламаллискер кӑткӑс, анчах питӗ илемлӗ юрӑ. Марценюк аслӑ лейтенант мана ыттисем юрланӑ хушӑра ҫӳлти нота ҫинче нумайччен тӑсмалли вырӑна тытса пыма ыйтрӗ. Кун пек юрӑ тата хитре янӑрать. Анчах та ӑна тӑсса тӑма кӑкӑр калӑпӑшӗ пысӑк пулмалла. Ҫав хитре вокализа тӑсса юрлама Бойко аслӑ сержант та вӑртӑн хатӗрленнӗ иккен. Вӑл ҫав вырӑна чаплӑ юрлама тӗллев лартнӑ. Ыттисене тӗлӗнтерме шухӑшланӑ. Отпуск илесшӗн пулнӑ. Ку юрра полк командирӗ питӗ килӗштерет иккен.

Марценюк аслӑ лейтенант Бойко сержанта Никифоров рядовая нимӗнле наряда та ямалла маррине малтанах асӑрхатарнӑ. Шӑп та лӑп полкӑн смотр кунӗнче пирӗн взводран темиҫе салтак нарядра пулмалла. Бойко сержант мана чи аякри поста – виҫҫӗмӗш форта, боеприпассен складне наряда ҫырнӑ. Марценюк аслӑ лейтенанта вӑл кун пирки пӗлтермен. Марценюк смотр пуҫланиччен чылай маларах плацра взводпа репетици ирттерет. Юлашкинчен маршпа юрӑ юрласа иртме хушать. «Бородино» юрра пуҫласа юрлаҫҫӗ. Анчах ҫӳлти нота ҫинче качака пек янрашакан Бойко сассине илтсен шутсӑр тӗлӗнсе взвода чарса лартать.

– Ӑҫта Никифоров? – Бойко патне ыткӑнать вӑл.

– Постра, – шӑппӑн хуравлать хӑраса ӳкнӗ сержант.

– Хӑш постра?! – ҫухӑрать Бойкона аслӑ лейтенант.

– Виҫҫӗмӗш постра, – аран тухать ун сасси.

– Эсӗ манран куласшӑн-и? Кам хушнӑ сана Никифорова аякри поста яма?! Варченко рядовой, Никифорова ылмаштарма чуп. Санпа вара, Бойко сержант, ҫак хӑтланушӑн уйрӑм калаҫу пулать. Хатӗрлен, чӑт, сан юлашки служба кунӗ – раштавӑн вӑтӑр пӗрремӗшӗнче. Тӑванусене халех ҫырса пӗлтер: ан хумханччӑр сана киле вӑхӑтра кӗтсе илейменшӗн...

Икӗ ҫухрӑма туххӑмрах чупса ҫитрӗмӗр. Батальона кӗрсе парад тумӗ тӑхӑнса взводри туссем хушшине кӗрсе тӑтӑм.



Трибуна умӗнчен иртме взводсем хатӗр. Тӗрӗ самантран марш пуҫланать.

Трибуна ҫинче полк командирӗсем тӑраҫҫӗ. Взводсем вӗсен умӗнчен юрласа асфальта пичетлесе утаҫҫӗ. Пирӗн виҫҫӗмӗш взвод та питӗ ӑнӑҫлӑн юрласа тухрӗ. Кӑштахран пӗтӗм полк пӗр пулса «Бородино» юрӑпа трибуна умӗпе иртрӗ. Манӑн тепӗр хут юрлама тиврӗ.

Смотр пӗтсен взвод командирӗ Марценюк полк командирӗн тав сӑмахне мана ыталаса илсех пӗлтерчӗ.

Санинструкторсен курсне вӗренсе пӗтерсен экзамен патӑмӑр. Лайӑх паллӑсемпе. Инҫе чупассипе тӗслӗхлӗ взводсен йышне кӗртнӗ иккен. Марценюк савӑнса ҫеҫ ҫӳрет. Юлашки кунсем ҫитрӗҫ. Часах пире ҫӗр-шывӑн тӗрлӗ ҫӗрте вырнаҫнӑ десант полкӗсене ӑсатаҫҫӗ. Марценюк аслӑ лейтенанта капитан званийӗ пама хутсем тӑратнӑ. Пире, санинструкторсене, ефрейтор званийӗ пачӗҫ. Пакунсем ҫине пӗр йӗр «лычка» ҫӗлесе хутӑмӑр. Марценюк мана сӑмахпа тав тунӑ хыҫҫӑн службӑна малалла тӑсма Рязань хулине ыйтса илнӗ. Киле ҫывӑх Чӗмпӗр. Каунаспа сыв пуллашрӑмӑр. Рязань облаҫӗнчен хӗсмете лекнӗ Сергей Фроловпа Тула хулине ҫитсен ӑна Ефремово хулине ячӗҫ. Мана Рязане кайма ҫырчӗҫ. Сергей питӗ кӑмӑлсӑрланчӗ. «Пӗр вӗҫӗм самоволка чупма пуҫлать» тесе ӑнлантарчӗҫ.

Кӑнтӑрла тӗлне Рязане ҫитрӗм. Чугун ҫул вокзалӗнчен полка ҫитме автобус ҫӳрет. Десант полкӗ хула хӗрринчи поселокра вырнаҫнӑ. КПП-ран кӗрсенех юнашар штаб, медицина пункчӗ. Штабра хам ҫитнине паллӑ тутарттартӑм. Штаб писарӗ – чӑваш каччи Качушкин. Мана 3-мӗш батальона, санинструктор пулма ҫирӗплетрӗҫ.

Полк территорийӗнче тӗлӗнмелле шӑплӑх. Никам утни-чупни курӑнмасть. Качушкин писарь ӑҫта каймаллине кӑтартрӗ. 3-мӗш батальон столовӑйпа юнашар. Полк ученире. Ним тума пӗлмесӗр унталла-кунталла кумса ҫӳрерӗм. Кӑштахран столовӑйран чӑваш сӑнлӑ сержант тухса батальон умне ҫитрӗ. Эпӗ батальон казарми патӗнче тӑнине кура манран кам иккенне ыйтса кӑсӑкланчӗ. Чӑваш сӑнлӑ пулнӑран тӑван чӗлхепе сӑмахлас терӗм. Вӑл ман ҫине куларах пӑхса илчӗ те: «Эпӗ санӑн калаҫӑва ӑнланмастӑп», – терӗ.

– Ман хушамат Сарахман – еврей, – тет.

Эпӗ унран каҫару ыйтрӑм.

– Сӑнпа та, хушаматпа та чӑваш пекех эсир, – терӗм.

Вӑл каллех кулса ячӗ.

– Полкра виҫҫӗре яхӑн чӑваш салтакӗ, вӗсем пурте мана хӑйсен йӑхташӗ вырӑнне хураҫҫӗ. Полк ученире, унччен эпир темиҫе кун вӗсемсӗр пурӑнатпӑр. Халь сана столовӑя кайса довольствие тӑратмалла. Канмалӑх, ҫывӑрмалӑх вӑхӑт пур. Пӑхатӑп та эсир ывӑнса ҫитнӗ.

Столовӑя утрӑмӑр. Каҫпа Сарахман сержант гражданӑн тумӗ тӑхӑнса хулана тухма хатӗрленчӗ.

– Батальона никама та ан кӗрт. Телефонпа шӑнкӑравласан трубка тытса калаҫма пултаран. Мана савни кӗтет. Ирхине таврӑнатӑп.

Вӑл хӳме урлӑ каҫса малалла ыткӑнчӗ.

Полк учениререн таврӑнчӗ. Виҫҫӗмӗш батальон врачӗ Вербицкий аслӑ лейтенант. Паллашрӑмӑр. Шутсӑр савӑнчӗ. Эпӗ ветеринари техникумне пӗтернине пӗлсен мана тӳрех батальон санинструкторӗ пулма шанчӗ. Саккӑрмӗшпе тӑххӑрмӗш ротӑсенче ҫичӗ класс пӗтернӗ, тӑватӑ уйӑх санитара вӗреннӗ салтаксем кӑна. Ҫиччӗмӗш рота пачах санинструкторсӑр. Учениенче манӑн вӗсемпе пулмалла.

Вербицкий врач тӗлӗнмелле ырӑ чунлӑ, шӳте юратакан кӑмӑллӑ этем. Канмалли самантсенче батальонри офицерсем пурте ун тавра пуҫтарӑнаҫҫӗ. Медицина темипе вӑл виҫӗ сериал таран (кашни серинче виҫ ҫӗршер анекдот) пӗр чарӑнми калама пултарать. Офицерсем ун ҫумӗнчен хӑпма пӗлмеҫҫӗ. Кулас килсен ун ҫывӑхне пымалла.

Вербицкий врач мана полкӑн медицина пунктне кайса аслӑ врачпа паллашма сӗнчӗ. Полкӑн аслӑ врачӗ Фролов майор кӗрнеклӗ, тачка хул-ҫурӑмлӑ, кӑштах тухӑҫ ҫыннине аса илтерекен хура сӑнлӑ, ҫаврака пит-куҫлӑ, кӑмӑллӑ ар ҫын. Манра вӑл пӗрре курсах шанчӑк ҫуратрӗ. Эпӗ ветеринари техникумӗнче вӗреннине пӗлсен вӑл пушшех савӑнчӗ. «Эсӗ – фельдшер», – терӗ. Полкра пурӗ те пӗр фельдшер анчах иккен. Мана тӳрех дежурствӑна ҫырса хучӗ. Эрнере икӗ, тепӗр чух виҫӗ хутчен ПМП-ра дежурствӑра пулмалла. Пӗрремӗшпе иккӗмӗш батальонсенче Скрипка лейтенант тата Пинчук аслӑ лейтенант – врачсем. Фельдшерсам пачах ҫук. Тӗрӗссипе кашни батальонра фельдшер пулмалла. Дежурствӑра салтаксен медицина кӗнекине уҫса вулатӑп. Полкра вырӑссем, украинсем, чӑвашсем ытларах.

Вербицкий врач хӑйӗн черетлӗ дежурствисенче ялан мана хӑйпе пӗрле илет. Ку кӑштах тӗлӗнтеретчӗ. Сӑлтавне каярах тавҫӑртӑм: вӑл хама шаннӑ тивӗҫе мӗнле туса пынисене сӑнать иккен. Вербицкий врач, полкӑн аслӑ врачӗ Фролов майор та манпа кӑмӑллӑ – хӑйӗн дежурствине чӗнет. Ҫара киличчен ӑҫта вӗреннӗ, хӑш енчисем, кам пулса ӗҫленӗ – веҫех кӑсӑкланать.

Ҫарта укол тума пӗлни питӗ кирлӗ. Хӑш-пӗр санинструктор укол тума та хӑрать. Ку вӑл питӗ ансат япала-ҫке. Фролов майор чирлӗ салтаксене пӑхнӑ хыҫҫӑн мана чӗнсе диагноз лартма хушать. Нумайӑшне тӗрӗс лартатӑп. Вӑл тӗлӗнетчӗ. «Санӑн врач пулмалла, малалла вӗренмелле, санра врач интуицийӗ пур», – тет. Дежурствӑра чухне ҫывӑрма вӑл килне каять. Тем пулас пулсан ӑна телефонпа чӗнсе илмелле – ҫывӑхра пурӑнать. Ирхине таврӑнать. Манӑн ӑна, вӑл килнине сиссе, ҫӗр каҫа мӗнле пӑтӑрмах пулса иртнисене доклад тумалла е ҫав каҫах шӑнкӑравламалла.

Врач киличчен ирхи процедурӑсене веҫех туса пӗтермелле. Юрла-юрла укол тӑватӑп, повязкӑсене улӑштаратӑп, тата тем те пӗр ӗҫ тумалла... Пациент нумай пулсан врач киличчен те ӗҫе вӗҫлеме вӑхӑт ҫитмест. Хӑш чух вӑл маларах та килме пултарать. Ун чухне вӑл пӗр сӑмах шарламасӑр шӑппӑн кӗрсе тӑрать те юрӑ пӗтсен хыттӑн алӑ ҫупать. Пичӗ ҫинче ырӑ кулӑ. Эпӗ доклад тума хускалсанах чарса лартать.

– Куратӑп сирӗн кунта пурте йӗркеллӗ. Доклад туса ан чӑрман. Маттур. Юрӑпа ӗҫлекен ҫын – ырӑ чунлӑ этем. Юрӑ чирлӗ ҫынна эмел пекех пулӑшать. Халь малалла ӗҫлер...

Полкри пурнӑҫа ерипен хӑнӑхса пыратӑп. Кунти служба нумай енӗпе урӑхларах, кӑткӑсрах. Куҫа курӑнман тӗрлӗ йывӑрлӑх тухса тӑрать. Вӗсене чӑтса ирттермелле.

Ҫӗнӗ вырӑнта юлташсем те тупӑнчӗҫ. Чуна уҫса калаҫсан чӗре ҫине ҫӑмӑллӑх килет. Мана батальонри хуҫалӑх взводне уйӑрчӗҫ. Поварсем, батальон писарӗ, комсомол секретарӗ, водительсем пӗр взводра шутланатпӑр. Унта тӗрлӗ халӑх йӗкӗчӗ, анчах пӗр чӑваш та ҫук. Пӗр-пӗрин хушшинче харкашу-тӗркешӳ хуҫаланмасть.

1965 ҫул. Ҫу уйӑхӗ. Полк плац ҫинче. Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫинче тӑшмана ҫӗнтернӗренпе ҫирӗм ҫул ҫитрӗ. Кашни офицера, кашни салтака ҫак ятпа медальсем ҫакса ячӗҫ. Полк территорийӗнче нумайччен «Ура!» янӑрарӗ. Тепӗр кунне Мускава парада илсе кайрӗҫ. Репетицисем пуҫланчӗҫ. Ай, йывӑр-ҫке муштровка. Темиҫе кун хушшинче УАЗ машинӑсенче ларса пыракан салтаксен пуҫсене ҫип ҫапнӑ пек тӳрӗ, автоматсене тикӗс тытса пымалла. УАЗ машинӑн ҫӳлти пайне илсе пӑрахса икшер сак ҫинче виҫшер салтак ларать. Машинӑсен хӑйсен те тӑватшар рете пӗр тан тытса пымалла. Пӗтӗм кӑткӑс дистанци, тӳрӗ йӗр тытасси пӗрре те ҫӑмӑл мар. Эрне хушшинче йӗркеленсе чиперех хӑнӑхса ҫитрӗҫ. Хӗрлӗ лапамра та пӗр сӑлтӑксӑр иртсе кайрӗҫ. Рязане таврӑнсан хавхаланӑвӑн вӗҫӗ-хӗрри пулмарӗ. Парад мӑнаҫлӑх ҫуратрӗ. Тирпейлӗх хистерӗ малашнехи кунра.

Ҫу уйӑхӗн кунӗсем. Икӗ хутчен парашютпа сикрӗмӗр. Суранланакансем пулмарӗҫ. Полкра сикме хӑракансем те пур иккен. Кӗҫех учени тапхӑрӗ пуҫланать. Йывӑр мероприяти вӑл. Хатӗрленмелле. Эпӗ полк санчаҫӗнче дежурнӑй фельдшер. Манӑн столовӑйра ирхи апат пахалӑхне тӗрӗслемелле. Десантниксене ыттисенчен хаклӑрах тата пахалӑхрах апат ҫитереҫҫӗ. Тӗрӗссипе столовӑя Вербицкий врачӑн каймалласчӗ, анчах вӑл килӗнчен килеймерӗ – пӗчӗк ачи чирленӗ иккен. Шӑнкӑравласа пӗлтерчӗ.

Столовӑя тӗрӗслеме тухса каяс тенӗ саманта аслӑ врач Фролов майор ҫитсе кӗчӗ.

– Вербицкий врач ӑҫта, мӗншӗн халь те медпункта килмен?

– Вӗсен пӗчӗк ачи чирленӗ, – хуравларӑм эпӗ.

– Юрать. Ун вырӑнне хам йышӑнӑп. Эсӗ столовӑя кайса апат пахалӑхне тӗрӗсле, – терӗ вӑл хавасах мар кӑмӑлпа.

Ҫак саманта, калаҫӑва Прохоренко фельдшер итлесе тата курса тӑчӗ. Вӑл ПМП-ра ирӗклӗ фельдшер пулса обслуга персоналӗпе пӗрле уйрӑм пӳлӗмре пурӑнать. Аслӑ врач манпа ӑшӑ туйӑмпа калаҫнине курсан шутсӑр кӗвӗҫет. Фролов майор ӑна хӑйне ытла хисеплеменни палӑрать. Обслуга персоналӗ те юратмасть мӑн кӑмӑллӑ фельдшера. Чирлӗ салтаксем те ӑна укол тутарасшӑн мар – ытла ыраттарать теҫҫӗ. Укол тума пуҫличчен вӑл вӗсен кӑмӑлӗсене хуҫать иккен.

**(Малалли пулать).**

# Хаваслă 2014 самант

## «Чăваш алфавичĕ» сăмах каçмăш










1. Акăлчан писателĕ. 2. Улма-çырла. 3. А.Любимовăн юратнă инструменчĕ. 4. Пионерсен сăпрайĕ. 5. Афганистанри хула. 6. Пысăк чыс. 7. Çĕр кăмрăк тĕсĕ. 8. Автомашина «пӳрчĕ». 9. Тĕпсĕр хăвăл. 10. Нидерландин паллă анатомĕ тата физиологĕ. 11. Абхази литературине пуçарса яраканĕ. 12. Тимĕр укçан реверспа аверс хушшинчи хысакĕ. 13. Скифсен çĕмрен хутаççи. 14. Бразили наци оперине чĕртсе тăратаканĕ. 15. ... электростанци. 16. Мускаври театр институчĕ. 17. Теннисри тапхăр. 18. Акăлчансен нумай çул влаçа тытса пынă корольсен ячĕ. 19. А.Пушкин хăйĕн юмахне çак акăлчан писателĕсенчен йĕрлесе илнĕ. 20. Артист антуражĕ. 21. Ӳнер, культура ĕçченĕсене юлашки вăхăтра паракан пулăшу. 22. Йывăрăш виçи. 23. ... Распутин. 24. Пурçăн лĕпĕш çăмарти.

1. Тискер кайăк. 2. Пĕр тăрăхра çуралнă çын. 3. Хĕрлĕ шăшин тăвата хӳре (туп.юм.). 4. Хĕрарăмсен эрешĕ. 5. Икĕ кӳлĕ хушшинчи шыв çулĕ. 6. Н.Шупуççынни поэми. 7. ... çуха (диалект). 8. Ф.Павлов çырнă «Ялта» драмăри сăнар. 9. Тутарсен паллă писателĕ. 10. «Йăмра» сăмахăн чăвашри тепĕр ячĕ. 11. Вырăс юмахĕнчи сăнар. 12. Кăвар тытмалли хĕскĕч (диалект). 13. «Явăç, сырăн, çыпçăн» синонимсен ретĕнчи тепĕр сăмах. 14. Ç.Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэмăри сăнар. 15. Чăваш поэчĕн П.Вашаватăн чăн хушамачĕ. 16. Чăваш писателĕ. 17. Тăван мар ывăл е хĕр. 18. Вырăс писатель-халапçă. 19. ... Николаева (Олимп чемпионки). 20. Чăваш Республикинчи район центрĕ. 21. Сĕтел çитти. 22. Смоленск облаçĕнчи хула. 23. Чăваш чĕлхинчи услови союзĕ. 24. Чăваш чĕлхинчи хыç сăмах.

1. «Шăнкăр кăна, шăнкăр, шыв юхать, Шăнкăрчă та чĕппи шыв ...» (юрăран). 2. Кайăк пайĕ. 3. Хытă сасă, шав, янрав, кĕрлев. 4. Ĕнтĕ вăталăххине ..., тет, сыхлама кайма (юмахран). 5. Чун (Н.Ашмарин словарĕнчен). 6. Хунани, йышланни, йыш ӳсни. 7. Эпир туя кайсассăн туйăн ... килетçке (хал.сăм.). 8. Етĕрне районĕнчи Тури Мучар ялĕ çумĕнчи çырма (Н.Ашмарин словарĕнчен). 9. Тăван енче чул та ... (ват.сăм.). 10. Атăл юппи (Илеть) (Н.Ашмарин словарĕнчен). 11. Упăшкин аслă пиччĕшĕ. 12. ... – çикĕ. 13. «Йăвала, çăр, çемĕçтер» синонимсен ретĕнчи сăмах. 14. Шăнкăрча аса илтерекен вĕçен кайăк. 15. Кукăль ăшне хуракан курăк. 16. Уçланкă. 17. Кам ...мест – вăл çимест (ват.сăм.). 18. Чăваш поэчĕ. 19. ... Хĕрлĕ Ялав (орден ячĕ). 20. Менюри 3-мĕш блюдо. 21. Патша. 22. ...ĕ паракан юрайман, элек паракан юранă (ват.сăм.). 23. ...-теппĕл. 24. Пушкăртстан тĕп хули.

## Сăмах вăчăри



1. Тарăн юр. 2. Хĕллехи пулăм. 3. Çурхи уйăх. 4. Кĕске вăхăтра пулса иртнĕ ĕç. 5. Тăршшĕн ĕлĕкхи виçи. 6. Хĕле ăсатмалли уяв. 7. М.Акимов (Аруй) драми. 8. «Хĕç-пăшал» ăнлавăн ĕлĕкхи ячĕ. 9. Медицина приборĕ. 10. И.Мучи юмахĕ. 11. «Хирсенче юр анчах, çырмара пăр анчах, сивĕтет аванах...» Ку хăçан пулать-ши? (автор). 12. Шăнкăр-шăнкăр шыв юхакан вырăн. 13. Музыка сăпрайĕ. 14. Тăвай районĕнче çуралса ӳснĕ, Сочири Олимпиада валли эмблема хатĕрленĕ хĕр ачан ячĕ. 15. «Выльăх» ăнлавăн тепĕр ячĕ. 16. Электронлă кĕнеке. 17. Çар подразделенийĕ. 18. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă чăваш хĕрарăм композиторĕ. 19. Чăваш писателĕ. 20. Çулла тумланать, хĕлле пăрахать (туп.юм.). 21. А.Талвир романĕ. 22. ... ӳксен çумăр пулмасть (сăнав). 23. Французсен сăрă ăсти. 24. Çут çанталăкри пулăм. 25. Ӳнер жанрĕ. 26. Вут хыççăн юлакан каяш. 27. Чăваш радион пĕрремĕш дикторĕ. 28. А.Попов шутласа кăларнă ăслай. 29. Фотоаппарат пайĕ. 30. Медицинăшăн пысăк тӳпе хывнă нимĕç физикĕ. 31. Музыка палли. 32. Çавра коралл утравĕ. 33. Упăте тĕсĕ. 34. Пысăк хайлав тĕсĕ. 35. Авалхи вырăс журналĕ. 36. Пушкăртстанри чăвашсен йышлă пурăнакан район. 37. Вăхăт, тапхăр. 38. Л.Агаковăн «Салтак ачисем» повеçĕнчи сăнар. 39. Паха тир пайĕ. 40. Шăлсăр карчăк шăм кăшлать (туп.юм.). 41. Хурт-кăпшанкă. 42. Ăслăлăх енĕпе тăрăшакан специалист. 43. Ут таврашĕ. 44. Вĕçен кайăк. 45. Степан Разин çарĕнчи чăваш çар пуçĕ. 46. Топливо. 47. Чăваш радио передачи.

## Ребус



Чăваш халăх поэчĕ В.Давыдов-Анатри сăмахĕсем вуланĕç.

## Кашни сăмахра – «Т» сас палли



**Сылтăмалла:** 1. Чăваш чĕлхипе литература учебникĕн авторĕ, халăхра «Çӳлĕç» ятпа юлнă вĕрентекен. 6. Казахсен кавирĕ. 8. Электричество приборĕ. 11. Юхан шывра, тинĕсре, океанта шыв айне пулман çĕр. 14. Çĕмĕрле районĕнчи историлле ял. 15. Ишев судни. 16. Чăваш писателĕ. 17. Иркутск облаçĕнчи хула. 20. Чăваш журналисчĕ, писателĕ. 22. Алăк пайĕ. 23. Уйрăлу саманчĕ. 26. Чăваш драматургĕ, «Пушар лаши» пьеса авторĕ. 27. Шупашкарти кафе. 28. Чăваш чĕлхинчи междомети.

**Аялалла:** 1. XXVI çуллахи Олимп вăййисен тĕп хули. 2. Вĕçевçĕ. 3. Ӳнер тĕсĕ. 4. “Халăх тарçи». 7. Электродвигатель пайĕ. 9. Спортсмен. 10. Юрăçă. 12. Пĕрпĕр ыйтупа ĕçлекен орган. 13. Чăваш композиторĕ. 18. РФ область центрĕ. 19. Чăвашла тухнă пĕрремĕш роман. 21. Старт пистолечĕ. 24. Чăвашла тухакан журнал. 25. Пулă тытмалли хатĕр.

***Юрий ФРОЛОВ*** (Шупашкар) **хатĕрленĕ.**